24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 1 КӖҪНЕРНИКУН 1 (6026) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

Кавказ фрончӗн командующине генерал-лейтенант КОЗЛОВ юлташа
Хура тинӗс флочӗн командующине вице-адмирал ОКТЯБРЬСКИЙ юлташа

Тӑшмана ҫӗнтерне ятпа тата Керчь хулипе крепоҫне, Феодосия хулине нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ ятпа Сире саламласа сывлӑх сунатӑп.

Генерал Первушинпа генерал Львовӑн паттӑр войскисене тата пӗрремӗш рангри капитанӑн Басистыйӑн ҫар карапӗсен группинчи чаплӑ моряксене, Совет Крымне ирӗке кӑларас ӗҫе пуҫласа янӑскерсене, саламлатӑп.

Крыма нимӗҫ захватчикӗсенчен тата вӗсен Румынипе Италири хӳрешкисенчен ирӗке кӑлармаллах.

И. СТАЛИН.

Мускав, 1941 ҫулти декабрӗн 30-мӗш.

Ҫӗнӗ ҫулти ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемшӗн

Хаяр вӑрҫӑсемпе кисреннӗ кивӗ ҫул хыҫа тӑрса юлчӗ. Вӑл, иртнӗ вӑхӑтсен ытамне кӗрсе, этемлӗх историйӗшӗн ӗмӗр-ӗмӗрех йывӑррӑн асӑнмалли ҫул пулса юлӗ. Пысӑк ӗмӗтсемпе хавасла шанчӑксем сунакан ҫӗнӗ ҫул — 1942 ҫул пуҫланчӗ.

Кивӗ ҫула вӗҫлесе ҫӗннине кӗнӗ чух эпир яланах иртнӗ ҫулталӑк хушшинче тунӑ ӗҫсен итогӗсене пӑхса тухса пахалатпӑр, ҫавӑнпа пӗрлех малалла тумалли ӗҫсене шута илетпӗр.

Иртнӗ ҫулта пирӗн совет халӑхӗ, хӑйӗн тӑванла коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, социализм строительствин пур участокӗсенче те пысӑк ҫӗнтерӳсем турӗ; промышленноҫра, транспортра, ялхуҫалӑхӗнче, ҫавӑн пекех наукӑпа искусствӑра та паллӑ ҫитӗнӳсем турӗ. Виҫҫӗмӗш пятилеткӑн аслӑ строительствине пурнӑҫа кӗртсе пынӑ май, хулара та, ялта та ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем туса хавасланса ӗҫлерӗмӗр эпир.

Анчах та иртнӗ ҫул пирӗншӗн мирлӗ строительство ҫулталӑкӗ кӑна мар пулчӗ. Иртнӗ ҫул пирӗншӗн мирлӗ пурнӑҫа юратакан ҫӗршыв ҫине ултавлӑн тапӑннӑ нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑ ҫулталӑкӗ те пулса тӑчӗ. «Иртнӗ ҫулталӑкӑн малтанхи ултӑ уйӑхӗ хушшинче (...) пирӗн хамӑрӑн мирлӗ строительство ӗҫне туса пыма май пулчӗ. Ҫулталӑкӑн иккӗмӗш пайӗ... нимӗҫ империалисчӗсене хирӗҫ пыракан пиреx те хаяр вӑрҫӑ обстановкинче иртрӗ. Вӑрҫӑ, ҫапла вара, пирӗн ҫӗршывӑн иртнӗ ҫулталӑкри аталанӑвӗнче улшӑну вӑхӑчӗ пулса тӑчӗ. Пирӗн мирлӗ строительствӑна вӑрҫӑ чылаях ансӑрлатрӗ, хӑшпӗр облаҫсенчи ӗҫсене пӗтӗмпех чарса лартрӗ. Вӑл пирӗн пӗтӗм ӗҫсене вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек урӑхлатса ҫӗнетме хушрӗ. Вӑл пирӗн ҫӗршыва пурне те пӗрлештерсе тӑракан пӗрлӗхлӗ тыл туса хучӗ...

Пирӗн мирлӗ строительство тапхӑрӗ пӗтрӗ. Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ ирӗклӗхшӗн пыракан вӑрҫӑ тапхӑрӗ пуҫланчӗ» (Сталин.)

Ҫапла, ирсӗр фашистсем килсе тапӑннине пула, пирӗн хамӑрӑн пысӑк строительствӑсене чарса лартмалла пулчӗ. Пӗтӗм совет халӑхӗ Аслӑ Октябрьти революцире ҫӗнсе илнӗ ирӗклӗхсене тата социализмла тӑван ҫӗршыва ҫӑлса хӑварма ура ҫине тӑчӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫланчӗ. Кам хӗҫпӑшал тытма тивӗҫли—хӗҫпӑшал тытса, ылханлӑ тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫма фронта тухса кайрӗ. Тыла, производствӑна юлнисем, ҫулпуҫ Сталин хушнисене пурнӑҫа кӗртсе, хӑйсен пӗтӗм ӗҫӗсене ҫӗршыв оборонине кирлӗ май ҫӗнетсе урӑхлатрӗҫ.

Этемлӗхӗн ирсӗр тӑшманне хирӗҫ пуҫланнӑ вӑрҫӑ чарӑнман. 1942 ҫула эпир ҫак хаяр вӑрҫӑн хӗрӳллӗ тапхӑрӗнче кӗтсе илтӗмӗр. Гитлерла Германин империалисчӗсем пирӗн халӑха «сисӗм пек хӑварт» ҫӗнтерсе, нимӗҫ баронӗсемпе князӗсен чурисем туса хурасшӑн пулчӗҫ. Анчах вӑл нихӑҫан те пулас ҫук! Сталинла Конституцин тивӗҫӗсемпе пурӑнакан ирӗклӗ совет халӑхӗ нихӑҫан та тискер фашистсен чури пулас ҫук. Совет рабочийӗ, совет хресченӗ, совет интеллигенчӗ вӑл — чӑн-чӑн ирӗклӗ ӗҫҫынни. Социализмлӑ предприятисемпе колхозлӑ ялсенче стахановла ӗҫленӗ рабочисемпе хресченсем вӑрҫӑ фронтӗнче те геройла паттӑрлӑх пултаруллӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Мирлӗ строительствӑра чаплӑн ӗҫленӗ стахановецсем, ударниксем—вӑрҫӑ фронтӗнче Совет Союзӗн мухтавлӑ геройӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсем, вилӗмле хӑрушлӑхсем умӗнче те хӑйсен ҫӗршывӗн чӑн-чӑн патриочӗсем пулса, пурнӑҫне шеллемесӗр ҫапӑҫаҫҫӗ. Мамедов пек пӗччен 73 фашиста пӗтерекен, е сержант Белов пек пӗччен 30 нимӗҫ салтакне аркатса тӑкакан геройсенчен тӑракан Хӗрлӗ Ҫара нихӑҫан та никапле хаяр тӑшман та ҫӗнтерес ҫук. Пирӗн Хӗрлӗ Ҫар рабочисемпе хресченсен чӑн-чӑн тӑван ҫарӗ пулса тӑрать. Унӑн боецӗсем, командирӗсем, политработникӗсем — Ленин—Сталин партийӗ вӗрентсе ӳстернӗ большевикла ҫирӗп паттӑрсем. Иртнӗ ҫулӑн юлашки уйӑхӗнче Ростов, Тихвин, Керчь, Феодосия хулисене каялла илни, Мускав, Елец хулисем патӗнчи пысӑк ҫӗнтерӳсем пирӗн Хӗрлӗ Ҫар фашистла Германин вӑрӑ-хурахла ҫарӗнчен нумай ҫулте тӑнине кӑтартаҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫар иртнӗ ҫулта тунӑ ҫӗнтерӳсем вӗсем—эпир Гитлер ҫарне ҫак 1942 ҫулта пӗтӗмпех аркатса тӑкассине кӑтартакан малтанхи паллӑсем. Паян пуҫланнӑ ҫӗнӗ ҫул вӑл—гитлерла Германи ҫарне пуҫӗпех ҫапса ҫӗмӗрсе, хамӑр ҫӗртен хуса кӑлармалли ҫул пулса тӑрать. Эпир пӗччен мар. Пирӗнпе пӗрле демократиллӗ Великобритания, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем тата фашизм чуралатнӑ мӗнпур халӑхсем. Пӗтӗм демократиллӗ халӑхсем пӗрле пулнине эпир этемлӗх тивӗҫне таптакан тискер фашизма пуҫӗпех тата ӗмӗрлӗхех ҫапса салатӑпӑр.

Анчах пирӗн тӑшман халлӗхе вӑйлӑха. Унӑн вӑрҫӑ машинине эпир тин ҫеҫ амантма тытӑннӑ. Ӑна тӗппипех ҫапса ҫӗмӗрме татах та нумай вӑй, тӳсӗмлӗх тата пултарулӑх кирлӗ. Тӑшмана аркатса мирлӗ пурнӑҫа куҫас тесен, пирӗн аслӑ Сталин каланине пӗр самантлӑха та манмалла мар. Сталин юлташ пирӗн рабочисене, служащисене, колхозниксене пурне те ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеме хушать. Пурне те пӗтӗм вӑйпа хамӑрӑн тӑван Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ Флота пулӑшмалла чӗнет. Заводсенче ӗҫлекенсене — фронт валли танксем, самолетсем, тупӑсем тата ытти хӗҫпӑшал тавраш ытларах та ытларах туса кӑларма хушать; колхозниксене — Хӗрлӗ Ҫар валли тырӑ, аш-какай, сӗт ҫу тата промышленность валли чӗртавар ытларах парса тӑма чӗнет.

Сталин каланисене асра тытса, пӗтӗм промышленноҫа, пӗтӗм ӗҫсене вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи условисене тивӗҫлӗ пек урӑхлатса ҫӗнетсе ҫитермелле. Предприятисенче вуншарӑн тата ҫӗршерӗн ҫӗнӗ ударниксем — вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи стахановецсем ҫитӗнсе ӳсеҫҫӗ. Анчах пирӗн тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса тӑмалла мар, пӗрмаях малалла каймалла. Нумай станокпа ӗҫлекен стахановецсен йышне ытларах ӳстермелле, кашни рабочи, кашни служащи, кашни колхозник хӑйӗн ӗҫне вӑрҫӑччен хинчен икӗ-виҫӗ хут ытла ӳстерсе, кулленхи ӗҫ нормине икшер-виҫшер хут ытла тултарса пымалла. Кашни предприятин, кашни артелӗн ҫар валли кирлӗ япаласене срокра туса памалла.

Ҫакӑнпа пӗрлех пирӗн ялхуҫалӑхӗ умӗнче те пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта нумай колхозсем оборона фондне тата Хӗрлӗ Ҫар валли тырӑ, аш-какай, сӗт-ҫу парса пулӑшрӗҫ. Кулайӑх ӗҫе малалла та сарса пымалла. Кунсӑр пуҫне тата пирӗн республикӑра ҫитес ҫуркуннерен технически культурӑсем ытларах акассине сармалла, ҫӗнӗ культурӑсем (сахӑр кӑшманӗ, каучук паракан культурӑсем) акма тытӑнмалла, тырпул акмалли ҫӗр лаптӑкне ӳстермелле, ӗҫ дисциплинине хӑпартмалла.

Ҫакӑн пек задачӑсем тӑраҫҫӗ пирӗн хулапа ял умӗнче паян пуҫланнӑ ҫӗнӗ ҫулта. Коммунистсен партийӗ тата аслӑ ҫулпуҫ Сталин юлташ ертсе пынипе пирӗн ӗҫҫыннисем вӗсене пурне те чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗҫ. Тылпа фронт таччӑн пӗрлешсе ӗҫлесе, хамӑр ҫӗршыва ҫӗмӗрсе кӗнӗ тискер фашизма тӗппипех пӗтерсе хурӑпӑр. Вара ирӗкленнӗ аслӑ ҫӗршывра каллех мирлӗ ҫутӑ пурнӑҫ, мирлӗ строительство пуҫланса кайӗ.

Ҫӗнӗ ҫулти ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемшӗн, малалла!



Г. ЕЧЕИСТОВ художник ӳкерчӗкӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Декабрӗн 30-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ.

Декабрӗн 30-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ пур фронтсенче те ҫапӑҫнӑ. Нумай участоксенче пирӗн войскӑсем, противник хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта, ҫав шутрах Козельск хулине тата Угодски завода йышӑнса илнӗ.

Декабрӗн 29-мӗшӗнче нимӗҫсенне 8 самолет пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 3 самолет пӗтнӗ.

* * *

Декабрӗн 29-мӗшӗнче пирӗн авиаци нимӗҫсенне 44 самолет, войскӑсемпе тӗрлӗ груэсем тиенӗ 1070 автомашинӑна ытла, 43 оруди, боеприпассем тиенӗ 320 лава ытла, горючи тултарнӑ 18 автоцистернӑна пӗтерсе тӑкнӑ, чугунҫул ҫинчи 8 эшелона ҫунтарса янӑ, боеприпассен икӗ складне сирпӗтсе янӑ тата противник пехотин 4 полкне яхӑн сапаласа янӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть, противника хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫса, пӗр кун хушшинче нимӗҫсене халӑх пурӑнакан 10 пунктран хӑваласа кӑларнӑ. Тӑшман пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Б. ятлӑ ял патӗнче кӑна пирӗн боецсем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 550 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ: 16 танк, 44 оруди, 30 пулемет, 5 миномет, 50 автомашина, 3.650 снаряд, 1000 мина, 25.000 патрон тата ытти ҫар пурлӑхӗсем те тытса илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнчи участоксенчен пӗринче пирӗн часть темиҫе кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1800 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ, тӑшманӑнне 6 оруди, 43 пулемет, 6 миномет тата ытти трофейсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Ленинград фронтӗнчи участоксенчен пӗринче Федюнинский юлташӑн боецӗсем пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче халӑх пурӑнакан 8 пункта йышӑнса илнӗ, противникӑнне танксене хирӗҫ кӗрешмелли минӑсем тиенӗ чугунҫул вагонне, 600 снаряд, бензин тултарнӑ 15 пичке тата ытти хӗҫпӑшалсем нумай тытса илнӗ. П. пункт патӗнче хупӑрласа илнӗ нимӗҫсен чаҫне, пирӗн войскӑсен ункине татса тухма тӑнӑ чухне, пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кӗҫӗн командир Савинӑн пулеметнӑй отделенийӗ ҫине нимӗҫсен пӗр группи наступлени туса пынӑ. Фашистсене 100—150 метр ҫывӑха пыма парса, паттӑр боецсем вӗсем ҫине пеме пуҫланӑ. Противник, хӑйӗн салтакӗсемпе офицерӗсен 60 виллине ытла пӑрахса хӑварса, нимӗн йӗркесӗр каялла чакнӑ.

* * *

Украинӑн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенче кӗрешекен Б. юлташӑн партизанла отрячӗ пысӑк ҫӗнтерӳ туни ҫинчен хыпар килнӗ. Партизансем, Хӗрлӗ Ҫарӑн пӗр чаҫӗпе ҫыхӑну тытса, нимӗҫсен 72-мӗш пехотнӑй СС дивизийӗн 1-мӗш батальонне тылран пырса ҫапнӑ. Партизансем фашистсен салтакӗсемпе офицерӗсене 100 ҫынна ытларах вӗлерсе пӗтернӗ, противникӑнне 250 велосипед, 2 мотоцикл, 1 автомашина, шултра калибрлӑ 2 пулемет тытса илнӗ. Тепӗр темиҫе кун иртсен, разведчик-партизансем С. ялӗ патӗнче гитлеровецсен отрячӗ кайни ҫинчен пӗлнӗ. Совет патриочӗсем ҫул хӗрринчи засадӑра нимӗҫсем килессе кӗтсе ларнӑ. Тӑшманӑн машинисене ҫывӑха ярса, партизансем вӗсем ҫине гранатӑсем пӑрахнӑ та нимӗҫсен 34 салтакӗпе 4 офицерне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

252-мӗш пехотнӑй полкран тыткӑна лекнӗ нимӗҫ салтакӗ Вольф Лем допросра ҫапла каласа панӑ: «Юлашки ҫапӑҫусем хыҫҫӑн пирӗн ротӑра 120 ҫынтан 35 ҫын ҫеҫ юлчӗ, вӗсенчен те 16-шне хытӑ тӑм илнӗ, 10-шӗ сывмар. Ҫарти дисциплина питех те чакрӗ. Декабрӗн 1-мӗш тӗлнелле пирӗн полкра, вӑрҫа хирӗҫ уҫҫӑнах каланӑшӑн, икӗ салтака персе пӑрахнӑ. Крупенево ялӗнче пирӗнпе юнашар тӑракан чаҫри 3 салтак: «Вӑрҫнин нимӗн усси те ҫук. Российӑна пурӗ-пӗр ҫӗнтерейместӗн», тесе хӑйсен винтовкисене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ».

* * *

Кузнецкри металлурги заводӗнче 1941 ҫулта 2400 рационализаторла сӗнӳсем панӑ. Ҫак сӗнӳсенчен халӗ 1200-шӗпе производствӑра усӑ кураҫҫӗ, вӗсем ҫулталӑкне 9 миллион тенкӗ перекетлӗх параҫҫӗ.

Декабрӗн 31-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 31-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ пур фронтсенче те ҫапӑҫнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть, противник вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, нимӗҫсене халӑх пурӑнакан чылай пунктсенчен ҫапа-ҫапа кӑларнӑ. Ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 3 йывӑр оруди тата танксене хирӗҫ пемелли 4 тупӑ, 2 миномет, 8 пулемет, 5 автомашина, 150 велосипед тата ытти ҫар пурлӑхӗ те нумай тытса илнӗ.

* * *

Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче противник пирӗн позицисем ҫине хаяр атакӑсем туса кӗме тӑнӑ. Ҫав атакӑсене ҫапса аркатса, пирӗн боецсем противника каялла сирсе янӑ, ӑна йывӑр ҫухатусем кӳнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 200 ҫити вилли выртса юлнӑ.

Тӑшманӑнне 4 оруди тата 12 станковӑй пулемет пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Старший сержантӑн Зафоражанӑн отделенийӗ тӑшманӑн йывӑҫпа тата ҫӗрпе тӗреклетнӗ 2 огневой точкине атакӑланӑ та унта вырнаҫса тӑнӑ нимӗҫсен темиҫе вуншар салтакне пӗтерсе тӑкнӑ. Новоселки ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫура отделени тӑшманӑн танксене хирӗҫ пемелли 4 орудине тытса илнӗ те ҫав орудисенчен тапӑнса пыракан противник ҫине ҫавӑнтах пеме пуҫланӑ. Тӑшмана нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене пӗр ротӑна яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Вилнӗ нимӗҫ унтер-офицерӗн Зоргенфрейнӑн ҫумӗнче киле яма ӗлкӗреймен ҫыру тупнӑ. Акӑ мӗн ҫырнӑ вӑл декабрӗн 10-мӗшӗнче: «...Ку вӑрҫӑ, шелleме тивӗҫлӗ, пире пит пысӑк ҫухатусем тӳстерчӗ те ӗнтӗ, анчах та чи хӑрушши малта кӗтсе тӑнӑ пек туйӑнать. Вырӑссен наступленийлӗ операцийӗсемпе вӑйлӑ сивӗсем салтаксен ҫапӑҫури шухӑш-кӑмӑлӗсене пусарса лартрӗҫ. Нихӑҫан та пирӗн дезертирсем хальхи пек нумай пулман. Пӗр облава вӑхӑтӗнче эпӗ халӑх пурӑнакан 3 пунктра 35 дезертир арестлерӗм, вӗсем хӑйсен подразделенийӗсенчен ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче тарса тухнӑ.»

* * *

Мускав облаҫӗнчи Ново-Петровск районӗнчи халӗ нимӗҫсенчен каялла туртса илнӗ Слобода ялӗнче пурӑнакан 60 ҫулти хресчен Аркатов ҫапла пӗлтернӗ: «Фашистсем пирӗн яла кӗрсенех пурне те ҫаратма пуҫларӗҫ. Пирӗнне ӗнесене, сурӑхсене, чӑхсене, ҫӑнӑх, кӗрпе, пахча-ҫимӗҫ запасӗсене тытса илчӗҫ. Нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем пирӗнне мӗнпур ӑшӑ тумтире, ҫӑматӑсене, кӗпе-йӗм тавраш йӑлтах туртса илчӗҫ. Мана пӗр нимӗҫ салтакӗ ял вӗҫӗнче тӗл пулчӗ те урари ҫӑматта, ҫири кӗрӗке хывса пама хушрӗ, вара эпӗ киле ҫитиччен ҫара уран утрӑм. Ҫаратусем хыҫҫӑн персе вӗлерессисем пуҫланса кайрӗҫ. Нимӗҫсем ҫак хресченсене персе пӑрахрӗҫ: К. Белянкина, Н. В. Капустина, Н. А. Кадильщика, Е. И. Баранова, М. И. Рыжова, Осиповӑна т. ыт. те. Йывӑр хӗрарӑма Т. Евдокийӑна, ҫӑмӑлланас вӑхӑчӗ икӗ эрне кӑна юлнӑскерне, гитлеровецсем ирӗксӗрлесе пусмӑрланӑ».

* * *

Итали стрелокӗсем Ужице хули патӗнче нумаях пулмасть ҫапса аркатнӑ пехотнӑй чаҫӗнче тӑнӑ икӗ ротине Югослави партизанӗсем Рогачица хулин районӗнче хупӑрласа илнӗ. Ротӑсен личнӑй составне пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ. Тытса илнӗ трофейӑсем хушшинче 3 оруди тата 4 пулемет.

Партизансен группине орденсем пани

Ленинград облаҫӗнчи партизансене, нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартнӑшӑн наградӑланӑскерсене, ӗнер ССР Союзӗн орденӗсене панӑ.

Ленинград фрончӗн Военнӑй Совечӗн членӗ, ВКП(б) Ленинград хула комитечӗн секретарӗ Кузнецов юлташ партизансен хӑюллӑ та хастар вожакне П. юлташа Ленин орденӗ парать. П. юлташӑн отрячӗ тӑватӑ уйӑх та 20 кун хушшинчи ҫапӑҫусенче тӑшман тылӗсем тӑрӑх 3800 километр ҫӳренӗ. Партизансем ҫав вӑхӑт хушшинче 1.483 нимӗҫе вӗлерсе пӗтернӗ, фашистсенне 6 танк, пӗр бронемашина, 2 самолет, ҫар грузӗсем тиенӗ 68 автомашинӑна, 28 мотоцикл пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшман каҫакан вырӑнсенче 70 кӗпере ҫунтарса янӑ, ҫыхӑну линийӗсене 30 километр тӑршшӗ пӑсса сиенленӗ.

П. юлташӑн ҫапӑҫури тусӗ, отрядӑн комиссарӗ Т. юлташ Хӗрлӗ Ялав орденӗ илет. Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗсене партизан-боеца К. юлташа, отряд штабӗн начальникне В. юлташа тата ытти партизансене те панӑ. Вӗсем нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсене пӗр шеллемесӗр пӗтерсе пынӑ.

Наградӑ илнисем пурте пысӑк наградӑшӑн хӗрӳллӗн тав тӑваҫҫӗ тата Сталин юлташ нимӗҫ оккупанчӗсене пурне те, пӗр ҫын юлмиччен, вӗлерсе пӗтерме наказ панине вӗҫне ҫитиччен пурнӑҫа кӗртме, ылханлӑ тӑшмана пирӗн тӑван совет ҫӗрне килсе ирсӗрленӗшӗн хаяррӑн тавӑрма тупа тӑваҫҫӗ.

Кузнецов юлташ наградӑланисене сывлӑх сунса саламланӑ, Хӗрлӗ Ҫар вӑйлӑн хӗссе пынипе фронтӑн чылай участокӗсенче каялла чакма тытӑннӑ нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ пӗтӗм совет халӑхӗ туса пыракан кӗрешӳре ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума сунса партизансене ӑшӑ сӑмах каланӑ. (ТАСС).

—o—

„Цивильстрой" колхоз членӗсен пуҫарӑвне ырларӗҫ

ИШЛЕИ. Ярапайкасси ялсоветне кӗрекен Доронин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем «Цивильстрой» колхоз членӗсен пуҫарӑвне ырларӗҫ. Хӗрлӗ Ҫара валли колхозниксем 5 сурӑх, 20 чӑх, 2 кӑвакал, пӗр вӑкӑр самӑртма пулчӗҫ. Кунсӑр пуҫне Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне 1120 ҫӑмарта яма пулчӗҫ.

А. ВЕСЕЛОВ.

Колхоз 1942 ҫулшӑн аш-какай пачӗ

ИШЛЕИ. «Самолет» колхоз государствӑна 1941-мӗш ҫулшӑн аш-какай парса татрӗ. 1942-мӗш ҫулшӑн та 365 килограмм пачӗ. Колхоз госпитальри красноармеецсемпе командирсем патне 50 чӑх пусса, ӑшаласа ячӗ.

Н. СУВОРОВ.

Ҫуракине хатӗрленеҫҫӗ

ЕЛЧЕК. Районри «Ново Тоскаево», «Петровка», «Кр. Восток», «Хунав», «М. Байдеряково» тата Крупская ячӗпе тӑракан колхозсем 1941 ҫулӑн ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ. Халӗ ҫуракине хатӗрленме тытӑнчӗҫ. Крупская ячӗпе хисепленекен колхоз паян куна уя 315 тонна тислӗк кӑларчӗ. Плугсене юсаттарса хучӗ. Вӑрлӑх сортлас ӗҫ те аван пырать. Декабрӗн 17-мӗш тӗлне 280 центнер ытла вӑрлӑх сортласа хунӑ.

В. ЕРМАКОВ.

Финанс планне тултарнӑ

Красноармейски ялсовечӗн председателӗ Павлов юлташпа налог агенчӗ Васильев юлташ IV-мӗш кварталти финанс планне декабрӗн 20-мӗш тӗлне 106 процент ытла пурнӑҫларӗҫ. Культсбор укҫине декабрӗн 23-мӗш тӗлне 300 тенкӗ ытла пухса панӑ. Колхозниксем Руссаков, Илларионов, Емельянов тата ытти юлташсем те культсбор укҫине пӗтӗмпех тӳлесе татрӗҫ. 1942 ҫулти январӗн пӗррремӗш тӗлне культсбор укҫине пухса пӗтерес тӗлӗшпе Красноармейски ялсовечӗ ытти ялсовечӗсемпе ӑмӑртса ӗҫлет.

ИГНАТЬЕВ.
Райфо заведующийӗ.

СТАЛИН ЮЛТАШ САЛАМĔ ПИРЕ ÇĔНĔ ÇĔНТЕРÿСЕМ ТУМА ХАВХАЛАНТАРАТЬ

Радио тăрăх калаçни

Паян 7 сехетре ирхине «Правда» хаçатăн корреспонденчĕ Мускавран радио тăрăх Кавказ фрончĕн военнăй совечĕн членĕпе, дивизионнăй комиссар Шаманин юлташпа çыхăннă. Шаманин юлташ çапла пĕлтерчĕ:

«Керчьпе Феодосие оккупантсенчен ирĕке кăларас тĕлĕшпе пулса иртнĕ операцисене çĕр çинчи, тинĕс çинчи тата сывлăшри вăйсем пĕр-пĕринпе питĕ таччăн çыхăнса кĕрешнипе тунă. Карапсем персе тапăннипе пĕр вăхăтрах çĕр çинчи войскăсем те тăшмана штурмларĕç, пирĕн сталинла соколсем пыра-пыра çапрĕç. Тинĕс çинчи вăйсен çил-тăвăллă çанталăк вăхăтĕнче, 7 баллă çил чухне, кĕрешме тиврĕ. Юр çуни тата вăхăчĕ-вăхăчĕпе çăмăр çуни пирĕн пехотăпа авиаци ĕçĕсене питĕ кансĕрлесе пычĕ. Анчах çапах та боецсем, морякссем, летчиксем хăйсен задачисене чаплăн пурнăçа кĕртрĕç. Вĕсем тăшман хирĕç тăнине аркатса тăкрĕç те малтанах палăртнă рубежсене йышăнса илчĕç.

Тăшман хăйĕн вилнĕ тата аманнă салтакĕсене, хĕçпăшалне пăрахса тарма тытăнчĕ. Пирĕн чăссем питĕ нумай трофейăсем тытса илсе ăна хăваласа пыраççĕ.

Фашистла варварсем Керчьпе Феодосире хăйсен юнлă йĕрĕсене хăварнă. Вĕсем халăха çаратса, чухăнлантарса хăварнă, пирĕн хуласене лапăртаса хунă. Феодосире пирĕн войскăсем Гитлер бандичĕсен ставленникне, фашистсен тарçине Грузинова арестленĕ.

Кавказ фронтĕнчи боецсем, командирсемпе политработниксем, çавнашкалах тата çак операцисене хутшăннă Хура тинĕс флотĕнчи карапсен личнăй составĕ Сталин юлташ хăйсене саламланине питĕ пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Çулпуçăн сăмахĕсем ĕнтĕ пуриншĕн те чи пысăк награда пани пулса тăраççĕ, вĕсем тăван çĕршывшăн çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантараççĕ. Мĕнпур личнăй состав Сталин юлташ хăй тунă план тăрăх пулса пыракан çапăçусене хутшăнма тивнĕшĕн тивĕçлипех мухтанать. Пирĕн пур воинсем те çапла калаççĕ: хамăр умма аслă çулпуç кăларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртес тесе, эпир хамăрăн вăя та, пурнăçа та шеллеместпĕр. Крыма нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен тата вĕсен Румынипе Италири хÿрешкисенчен тасататпăр, теççĕ.

Халĕ пирĕн войскăсем тăшмана хыççăн хăваласа, пĕтерсе пыраççĕ.

Кавказ фронтĕнчи боецсенчен, командирсемпе политработниксенчен Хĕвеланăç фронтĕнчи чаплă воинсене тата тăван Мускаври ĕççыннисене çĕнĕ çул ячĕпе хĕрÿллĕ салам калама ыйтатăп».

Кавказ фрончĕпе пулса иртнĕ калаçусене Мускавра радистсем Калфинкель, Кузьмина тата Осокина юлташсем йышăннă.

Чижов юлташăн боецĕсем

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧЕ, декабрĕн 30-мĕш. М. ялĕнче пирĕн боецсен ункине лекнĕ фашистсем Хĕрлĕ Çар воинĕсене хирĕç хаяррăн персе тăнă, унтан фашистсем ункăран хăтăлса тухма шут тытнă. 9 сехетре ирхине фашистсен 100 автоматчикĕ çăварĕсене пируссем хыпса, пĕр тикĕс стройпа пирĕн позицисем çинелле утма тытăннă. Вĕсем пĕр шавламасăр пынă, пăшалсенчен те пĕрре те пемен. Фашистла мерзавецсем психикăлла атака туса пирĕн боецсене хăратса ÿкерме шутланă. Анчах çакăн пек хăтланни ăнăçлă пулман. Каппайчăк воякăсене çывăхарах ярса, Чижов юлташăн боецĕсем пулеметсемпе автоматсенчен тата минометсенчен фашистсем çине тăвăллăн пеме тытăннă. Арпашсен чăрсăрлăхĕ ăçта кăна кайса кĕчĕ-ши! Вилнисемпе аманнисене пăрахса хăварса, нимĕçсем каялла тарма пуçларĕç. Тепĕр икĕ сехетрен нимĕçсем, хăйсен шăпине татах та тепĕр хут тĕрĕслесе пăхма шут тытса, татах психикăллă атакăна ыгтăнчĕç. Анчах çав атака фашистсемшĕн питех те самăсла путланса ларчĕ. Çапăçу хирĕнче çав ухмаха орнĕ нимĕçсен 30 вилли ытла выртса юлчĕ, ыттисем тарчĕç. Çав кунах нимĕçсем виççĕмĕш хутчен психикăллă атака туса пăхрĕç, анчах çав атака та вĕсемшĕн ăнăçлă пулмарĕ. Гитлеровецсем 40 çынна яхăн вилсе тата аманса выртса юлчĕç.

— Çук,—терĕç Чижов юлташăн боецĕсем,—пире псиxпа та, вутпа та илме çук!

Каçхине пирĕн подразделени, хăйĕн вăйĕсене урăхлатса пĕтĕçтерсе, противник йышăнса тăракан ял çинелле ывтăнчĕ. Хĕрÿллĕ çапăçура пирĕн патриотсем нимĕçсене çапса аркатрĕç, яла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче Чижов юлташăн боецĕсем 100 нимĕçе ытла вĕлерсе пĕтерчĕç.

Политрук МЕДВЕДЕВ.

Хĕрарăмсем çар ĕçне вĕренеççĕ

Совет патриоткисем çар профессийĕсене алла илессишĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшаççĕ. МТС-па çĕрĕç работникĕсен профсоюз Оргбюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, 53 хĕрарăм медсестрасен курсне вĕренсе пĕтернĕ, çавăн пекех 75 хĕрарăм, сандружинницăсен квалификацине илсе, халĕ практикăра ĕçлеççĕ.

В. СЕМЕНОВ.

ГЕРОЙЛА МУСКАВ УРАМĔСЕНЧЕ. Фашистла вăрă-хурахсем вĕççе тырса тапăнассинчен куç шăрçине сыхланă пек хÿтĕлесе тăраççĕ мухтавлă столицăна А. А. Терещенко командир пулса ертсе пыракан Н-ски чаçри зенитчиксем.

Укерчĕк çинче: Кĕçĕн сержантăн М. М. Трофимовăн (сылтăмра) зенитнăй пулемет расчечĕ яланах пеме хатĕр тăрать.

Л. ДОРЕНСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Вырăнти промышленноçăн иртнĕ çулти çитĕнĕвĕсем

Чăваш республикинчи вырăнти промышленность 1942 çула чылай пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕ.

1941 çулти декабрĕн 1-мĕш тĕлне вырăнти промышленность иртнĕ çулта тунă çитĕнÿсенчен иртгерсе 30 процент ытла продукци туса панă. Декабрĕн 20-мĕш тĕлне çав ÿсĕм малтанлăха шутланă тăрăх 35—37 процента çитнĕ. Промышленноçăн хăшпĕр отраслĕсем декабрĕн 1-мĕш тĕлне çулталăкри плана ытлашшипех тултарчĕç.

Чылай предприятисем хăйсен çулталăк планне срокчен тултарса планран ытлашши продукци туса парчĕç.

Канашри индпошив мастерскойĕ плана пуриччен малтан тултарчĕ. Мастерской директорĕ Данилов юлташ ĕçе тивĕçлипе организацилени пула артель коллективĕ 1941 çулта уйăхран уйăха плана иртгерсе тултарса пычĕ.

Çĕмĕрлери райпромкомбинат ноябрь уйăхĕн иккĕмĕш вуннăкунлăхĕнчех çулталăк планне пурнăçларĕ. Декабрĕн 20-мĕш тĕлне вăл планран иртгерсе 39,4 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Улатăрти промкомбинат çулталăк планне ноябрь уйăхĕнчех пурнăçласа, декабрĕн 20-мĕш тĕлне планран иртгерсе 71,9 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Сĕнтĕрвăрринчи промкомбинат та çулталăк планне ноябрь уйăхĕнче тултарса, декабрĕн 20-мĕш тĕлне планран иртгерсе 133 пин тенкĕлĕх ытла продукци туса кăларчĕ.

Малта пыракан артельсен примерĕпе Шăмăршăри промкомбинат та декабрĕн 20-мĕш тĕлне çулталăк планне тултарчĕ.

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăна 1941 çулти августăн 15-мĕшĕнче кăна вырăнти промышленноçăн системине илнĕ. Ленин ячĕпе тăракан фабрика начар мар ĕçлет. Вăл IV-мĕш квартал планне срокчĕнех тултарчĕ.

Çакнашкал лайăх примерсем республикăра татах та нумай. Çак çитĕнÿсем предприятисен руководителĕсемпе пĕтĕм коллективсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетнинчен килеççĕ. Вĕсем хăйсене панă заданине пурнăçлассишĕн большевикла кĕрешеççĕ.

Вырăнти промышленность предприятийĕсенче вăхăта шутламасăр, тăван çĕршывшăн тăрăшса ĕçлекен патриотсем сахал мар. Вĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕсемпе ытти рабочисен массисене пример кăтартаççĕ. Сĕнтĕрвăрринчи райпромкомбинатăн катка-пичке тăвакан заводĕнче нормăна 200—390 процент тултарса ĕçлекен рабочисен хисепĕ хăвăрт ÿссе пырать. Рабочи Федоров юлташ нормăна 390 процент тултарса ĕçлет. Лебедев, Денисов, Федоров, Акулин тата ытти юлташсем сменăри нормăна 300 процентран пуçласа 380 процент таран тултарса пыраççĕ.

Улатăрти хула промкомбиначĕн спортинвентарь фабрикинчи столярсем Беленковпа Ясенко юлташсем сменăра 3—4 норма тултарса ĕçлеççĕ. Чылай станочницăсем сменăри заданине икшер хут иртгерсе тултараççĕ. Станочница Цапенко юлташ мирлĕ вăхăтра подручнăй пулса ĕçленĕ. Халĕ вăл станок çинче ытти станочницăсемпе ăмăртса ĕçлет. Кулленхи нормăна 200 процент таран тултарса пырать.

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăра та хастарлă ĕçсемпе палăрса тăракан патриотсем сахал мар. Вĕсен пуçарулăхĕпе Чăваш республикинче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса парас ĕç анлăн сарăлчĕ.

Лайăх ĕçлесе пыракан предприятисемпе пĕрлех вырăнти промышленность системинче хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетмен, çулталăк планне тултарайман предприятисем те пур-ха.

1942 çулта вырăнти промышленноçăн тĕп задачи—вырăнти чĕртаварсен ресурсĕсемпе лайăх усă курса, халăх хуçалăхĕпе Хĕрлĕ Çара кулленхи кирлĕ продуктсене ытларах туса кăларасси пулса тăрать.

Çак задачăна пурнăçлама вырăнти промышленноçăн 1942 çулта татах та лайăхрах ĕçлемелле. Малта пыракан предприятисен тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармалла мар, производствăна кулленех ÿстерсе пыма тăрăшса ĕçлемелле. Кая юлса пыракан предприятисен лайăх ĕçлекенсенчен пример илсе малти рете тухассишĕн большевикла кĕрешмелле.

Предприятисенчи рабочисен, инженерно-технически работниксемпе служащисен хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе лайăх организацилени, районри организацисем тата Вырăнти Промышленность Халăх Комиссариачĕ предприятисене кулленхи ĕçре пулăшса пыни 1942 çулта вырăнти промышленность умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама пулăшмалла. 1942 çулти плана пурнăça кĕртме пирĕн пур условисем те пур. Эпир ăна пурнăça кĕртетпĕр те.

П. ВАСИЛЬКОВ.

Чăваш АССР Вырăнти Промышленность Халăх Комиссарĕ.

Трактористсен курсĕ

Етĕрнери машинно-тракторнăй станцинче çак кунсенче трактористсен 3 уйăхлăх курсĕ уçăлчĕ. Курсра 20 çамрăк вĕренет. Вĕсенчен нумайĕшĕсем хĕрачасем. Çамрăксем, хальхи вăхăтра трактора вĕренни пысăк усă панине ăнланса, трактор ĕçĕпе интересленсе вĕренеççĕ.

Акă Ядровкин («Правда» колхозран), Мушкин (Киров ячĕпе тăракан колхозран) курс уçăлнăранпа отличнăй паллăсемпе кăна вĕренеççĕ.

В. ЛАЗАРЕВ.

ЛАЙĂХ ĔÇЛЕРĔÇ

КАНАШ. (**Хамăр корр., телефонпа**). Юлашки кунсенче рабочисемпе ĕççыннисем хушшинче нихăçанхи пек мар вăйлă производствăллă, политикăллă çĕкленÿ палăрать. Предприятисен коллективĕсем мухтавлă Хĕрлĕ Çар тунă пысăк çитĕнÿсем çине çулталăк планне ытлашшипех тултарнипе, васкавлă заказсене срокчен пурнăçланипе ответлеççĕ.

Инвалидсен «Красный воин» артель коллективĕ 1941 çулти планран иртгерсе 480 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Çĕвĕ çĕлекен цех, трикотажнăй тата пĕветекен цехсем артелĕн малта пыракан цехĕсем шутланаççĕ. Вĕсем пурте çулталăк планне чылай иртгерсе тултарчĕç. Ку артельре плана тултараймани пĕр цех та, пĕр рабочи те çук.

Вырăнти промышленность системине кĕрекен индпошив мастерскойĕ те çĕнĕ çула производствăллă çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕ. Вăл 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне çулталăкри планран иртгерсе 194 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Стахановец-çĕвĕçсем Яров, Никитина, Евахина юлташсем васкавлă заказсене хăвăрт пурнăçлассишĕн вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлерĕç.

Çак кунсенче Сталин ячĕпе тăракан артельри стахановецсем ĕç тухăçлăхне татах та чылай ÿстерчĕç. Çуна тăвакан Ф. Фролов юлташ, йĕлтĕр тăвакансем: С. Слепов, И. Копылов, Е. Сальник юлташсем, токарьсем: Синон, Павлов, Кузьмин, Иванов юлташсем кулленхи нормăна 210 процент таран тултарса пыраççĕ.

— Çĕнĕ çул тĕлне 17 трактор юсамалла,—çакăн пек обязательство илнĕ пулнă МТС-ри рабочисем.

1941 çулти декабрĕн 30-мĕш тĕлне вĕсем 19 трактор юсаса, хăйсен обязательствине чыслăн пурнăçларĕç.

Тракторсене графикра палăртнă срокра тата тĕплĕн юсас тĕлĕшпе уйрăмăнах Кондратьев, Тимофеев, Амусов, Варламов юлташсем лайăх ĕçлерĕç.

Колхозниксен çитĕнĕвĕсем

Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем 1941 çулта иртнĕ çултисенчен пысăкрах тухăçлă тырпул туса илчĕç, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне те чылай ÿстерчĕç. Тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерннĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен партипе правительство йышăннă постановлени колхозниксен ĕçри хастарлăхне вăйлăн çĕклерĕ.

Иртнĕ çуркуннехи хĕрÿллĕ ĕç партипе правительствăн çав историллĕ постановленине тĕплĕн сÿтсе-явнă хыççăн пуçланчĕ. Колхозсем, бригадăсемпе звеносем, фермăсенче ĕçлекенсем, çĕнĕ законпа хĕçпăшалланса, вăйлă тырпулшăн тата йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн пыракан кĕрешĕве активлăн хутшăнчĕç. Малта пыракан бригадăсемпе звеносем, агротехника мероприятийĕсене вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçласа пырса, тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстермелли плана чылай иртгерсе тултарчĕç.

Рындинăри «Новая жизнь» колхозăн 2-мĕш бригади (бригадирĕ Тимохин юлташ) вăтам шутпа гектартан 14 центнер вырăнне 26 центнер таран кĕрхи тулă пухса илнĕ. Çавăн пекех «Ĕмĕт» колхозра Семенова юлташ звени те кашни гектартан 15,6 центнер вырăнне 17,8 центнер, «Ильич» колхозра Петрова юлташăн звени 13 центнер вырăнне 14 центнер тĕштырă пухса илнĕ.

Тырпул, пахча-çимĕç тухăçлăхне планран иртгерсе ÿстернĕ бригадăсемпе звеносем районра 23 шутланаççĕ. Вĕсене пурне те çĕнĕ закон тăрăх ĕçкунĕ çине хушса тырă параççĕ. «Красный бригадир» колхозри Шишкин юлташ ертсе пыракан звенона пахча-çимĕç туса илес тĕлĕшпе планлă задание иртгерсе тултарнăшăн 28 центнер купăста, 16 центнер помидор, 32 центнер арбуз хушса параççĕ. Çак звено туса илнĕ пахча-çимĕçсене базарта сутса, колхоз 150 пин тенкĕ тупăш илчĕ. Унсăр пуçне ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене чылай пахча-çимĕçсем валеçсе панă.

«Коснария» колхозри пахча-çимĕç звенинче ĕçлекенсем (звеновочĕ Марков юлташ) ĕçкунĕ çумне хушса 5-шер килограмм çĕрçырли, 7-шер килограмм хăмлаçырли тата 25-шер тенкĕ укçан илчĕç. Ку звено 0,25 гектар лаптăк çинчен 6 центнер вырăнне 25 центнер хăмлаçырли, планран виçĕ хут иртгерсе çĕрçырли пухса илнĕ.

Махорка тухăçлăхне вăйлăн ÿстернĕшĕн «Хĕрлĕ Тивĕш» колхозри махорка лартса ÿстерекен звенора ĕçлекен колхозниксем ĕçкунĕ çумне хушса 200-шер тенкĕ укçан, Буденный ячĕпе тăракан колхозри Андреева юлташ ертсе пыракан звенора ĕçлекенсем 191-шер тенкĕ укçан илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Районра таварлă сĕт-çу фермисем пĕтĕмпе 113. Вĕсенчен 25 ферма сĕт суса илмелли çулталăклăх плана 9 уйăх хушшинчех тултарнă. 66 ферма пăрусем çитĕнтермелли плансене пурнăçланă, 54 фермăра сăвакан 100 ĕнерен вăтам шутпа 100 пăру çитĕнтернĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан, «Планета», «Богатырь», «Дружба», «1905 год», «Красный флот» тата ытти колхозсенчи фермăсенче те кашни ĕнерен планран иртгерсе 400—1000-шер литр таран сĕт суса илнĕ. «Сталинцы» колхозăн ферминче 24 ĕнерен 23 пăру, «Красный флот» колхозра — 14 ĕнерен 14 пăру, «Кульмет» колхозра—19 ĕнерен 19 пăру çитĕнтернĕ.

Районри колхозсен сурăх фермисенчен 44-шĕнче вăтам шутпа 100 сурăхран 110 путек илнĕ. «Молодая сила» колхозăн ферминчи сурăхсем пурте 2-шер хут пăранланă. Çапла вара вăтам шутпа 100 сурăхран 210 путек çитĕнтернĕ. «Ĕмĕт» колхоз 30 сурăхран 42 путек, «Красный бригадир» колхоз — 20 сурăхран 40 путек, «Верный путь» колхоз — 47 сурăхран 63 путек çитĕнтернĕ. Районĕпе илсен, кашни 100 сурăхран 125 путек çитĕнтернĕ шутланать.

Районра таварлă сысна фермисенчен 18 ферма çăвăрсем ÿстерес плана ытлашшипех тултарнă. «Молодая сила» колхозăн ферминче вăтам шутпа кашни сысна аминчен 18-шар çăвăр, «Новая жизнь» колхозăн ферминче 24 амаран 480 çăвăр, «Пожанар» колхозăн ферминче 17 амаран 250 çăвăр çитĕнтернĕ.

Партипе правительствăн историллĕ постановленийĕ тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерме чылай пулăшрĕ. Çапах та çак чаплă документа пур колхозра та кирлĕ пек пурнăça кĕртсе пычĕç теме çук-ха. Уйрăм колхозсенче çакă паха законпа ĕç тухăçлăхне çĕклес енĕпе тивĕçлĕ пек усă курма пĕлмеççĕ.

Килес çулта кашни колхозрах ĕçкунĕ çумне хушса илекен бригадăсемпе звеносем, колхозниксемпе колхозницăсем пулччăр. Вăйлă тырпулшăн тата йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн пыракан кĕрешĕве пĕр колхоз та хутшăнмасăр ан юлтăр.

Г. ПЕТРОВ.

1942 çула фронтра тата тылра пысăк çитĕнÿсем тунипе паллă тăвар

Хĕрлĕ Çар фронтра пысăк çитĕнÿсем туни пирĕн кăмăлсене çĕклесе савăнтарать, çав çитĕнÿсем пире нимĕç захватчикĕсене килес çывăх вăхăтрах çĕмĕрсе тăкас шанчăк парса вăй кĕртеççĕ. Нимĕç фашисчĕсене çĕнтерес тесе, Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пирĕн тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетме мĕн кирлине тата мĕн пуррине пурне те туса пыраççĕ. Фашизма хăвăртрах çĕнтерес тесе, пирĕн çĕршыври ĕççыннисем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă пĕтĕм халăх вăрçи пулса тăчĕ. Пĕтĕм совет çĕршывĕ—рабочисемпе хресченсем, служащисемпе интеллигентсем, пур тĕрлĕ профессисемпе ĕçлекен çынсем—пурте Гитлера тата гитлеризма хирĕç кĕрешеççĕ. Пурин те пĕр ĕмĕт тата пĕр кăмăл—Германи оккупанчĕсене çĕмĕрсе пĕтерсе тăкасси. Çак çĕнтерĕве тăвас тесе, пирĕн çĕршыври халăх хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр фронт валли ĕçлет.

Сталин юлташ ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме, фронт валли ытларах та ытларах танксем, танка хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем тата тырпул, апат-çимĕç, промышленность валли чĕртавар парса тăма чĕнсе каланине пирĕн çĕршыври кашни патриот кĕрешÿри программа вырăнне хурса йышăнса илчĕ.

Ĕçре чăн-чăн героизмпа патриотизма палăртса ĕçлени примерĕсене эпир нумай илсе кăтартма пултаратпăр. Çакăн çинчен фабрикăсемпе заводсенчен тата колхозсенчен килекен савăнăçлă хыпарсем каласа параççĕ. Пирĕн республикăри ĕççыннисем, совет çĕршывĕнчи ытти халăхсем пекех, юлашки кунсенче ĕçре пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. Промышленность предприятийĕнчи тата транспортри рабочисемпе служащисем, чăваш çĕршывĕнчи социализмлă уйхирсен труженикĕсем, Хĕрлĕ Çар пысăк çĕнтерÿсем туни çине ответлесе, çулталăк планне иртгерсе тултараççĕ, васкавлă заказсене срокчен тултарса фронта пулăшассине вăйлатаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче пĕтĕм вăя хурса ĕçлени примерне Канашри вагонсем юсакан заводăн коллективĕ кăтартса парать. Сталин юлташ фронта пур майсемпе те пулăшма чĕнсе калани çине ответлесе, завод коллективĕ стахановла ĕçĕн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса парать. Заводри мĕнпур рабочисенчен 40 процентĕ нормăна 200 тата 300 процент ытла тултарса ĕçлет. Вагонсем юсакан заводри тимĕрçĕ цехĕ, литейнăй тата инструментальнăй цехсенчи рабочисем пурте нормăна 200 процент е ытларах та тултараççĕ. Баранин юлташăн бригади кашни кунах нормăна 700 процент тултарса ĕçлет. Базаров юлташăн бригади 400—425 процент тултарать, Щетин тата Дохленко тимĕрçĕсем 3—4 норма тултарса ĕçлеççĕ. Завод коллективĕ васкавлă продукци туса кăларас плана кашни уйăхрах иртгерсе тултарни уйрăмăнах савăнтарать. Пĕр вăхăтра заводра пĕр деталь çитмен пирки пысăк йывăрлăхсем тухса тăнă, çавна пула васкавлă заказ пурнăçа кĕмесĕр юлма пултарнă. Завод директорĕ Поздняков юлташ, партбюро секретарĕ Сорокин юлташ тата заводăн пĕтĕм коллективĕ тăрăшнипе пула, çак детале кĕске вăхăтрах хăйсен заводĕнче туса кăларма тытăннă. Хальхи вăхăтра завод çĕнĕ продукцисем туса кăларма вĕренсе пырать. Паллах, завод çак задачăна та ăнăçлăн пурнăça кĕрте.

Пирĕн республикăри ытти заводсен коллективĕсем те начар мар ĕçлеççĕ, кунта уйрăмăнах Улатăрти паровозсем юсакан завода палăртса хăвармалла.

Чăваш АССР-чи ĕççыннисем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе пирĕн çĕршывăн материальнăй тата укçа-тенкĕ ресурсĕсене ÿстереççĕ. Вĕсем тăшмана çĕмĕрсе тăкма хăйсен пĕтĕм вăйне параççĕ. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах пирĕн республикăри пĕтĕм халăх фронт интересĕсемшĕн ĕçлет, ăна тĕреклетес тĕлĕшпе мĕн май килнине пурне те тăвать. Вăрçă пуçланнăранпа эпир фронт валли пысăк пахалăхлă пиншер çунасем туса патăмăр, вуншар пин мăшăр йĕлтĕрсем хатĕрлерĕмĕр тата фронта кирлĕ ытти япаласене те нумай туса патăмăр.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем хăйсен тăван çĕршывне тата Хĕрлĕ Çара чĕререн юратнине, хăйсен пысăк патриотизмне кăтартса параççĕ. Вĕсем тĕрлĕ майсемпе фронта пулăшма тăрăшаççĕ. Çакна вара эпир çĕршыв оборонин фондне тăвас тата Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсем парса пулăшас ĕçе ăнăçлăн пулса пынинчен куратпăр. Ĕççыннисем оборона фондне укçа-тенкĕ, заем облигацийĕсем тата ытти хаклă япаласем параççĕ. Январĕн 1-мĕш тĕлне пирĕн республика тăрăх оборона фондне 5 миллион тенкĕ ытла укçа тата 6 миллион тенкĕ яхăн заем облигацийĕсем хывнă. Пирĕн республикăра Хĕрлĕ Çара ăшă тумтирсем парса пулăшас ĕç уйрăмăнах анлăн пулса пырать. Виçĕ уйăх хушшинче эпир 60 пин ытла тир пухрăмăр, вĕсенчен 6 пин кĕрĕк пиншак çĕлетнĕ, 35 пин килограмм çăм пухнă, вĕсенчен 15 пин мăшăр ытла çăматă йăваланă, 15.200 мăшăр çăм алшиш, 12 пин мăшăр чăлха, 12 пин мулаххай, 18 мăшăр тăла, 17 пин алшăлли, свитерсем, фуфайкăсем тата ытти япаласем нумай пухнă. Çак япаласене пурне те действующи Хĕрлĕ Çара ярса панă. Ăшă тумтирсем пухас ĕç малалла та пулса пырать. Укçа-тенкĕпе япала лотерейине сарас ĕç республикăра питех те организованно пулса иртрĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех республикăра укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 5 миллион та 500 пин тенкĕлĕх сарнă. Республикăри колхозниксем, лотерея билечĕсене 2 миллион тенкĕлĕх ытла сырăнса, укçине те парса татнă. Комсомолецсемпе çамрăксем пуçарнипе республикăра «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 1 миллион тенкĕ ытларах укçа пухнă.

Хуçалăх ĕçĕсенче те пирĕн ĕççыннисем тăрăшса ĕçлеççĕ. Çĕршер колхозсем иртнĕ çулти ялхуçалăх ĕçĕсене срокчен вĕçлерĕç, государство умĕнчи обязательствăсене пурне те тултарчĕç, хăçан пысăк тухăçлă тырпул туса илес тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерес тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çара продовольстви парса тата промышленноçа чĕртавар парса пулăшассине тăтăшах вăйлатаççĕ. Пирĕн республикăри малта пыракан колхозсем (Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Куславкка районĕнчи «Динамо», Чкаловски районри «Марс» колхозсем) хăйсен ытлашши тыррине государствăна сутма йышăннă. Çак пуçару фронта продовольстви парса пулăшас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Иккĕленмелли çук, çак малта пыракан колхозсен примерне пирĕн республикăри ытти колхозсем те йышăнса илĕç.

Çĕнĕ çул ячĕпе действующи Хĕрлĕ Çар валли парнесем пухас ĕç республикăра лайăх пулса иртрĕ.

Çак фактсем пурте Чăваш республикинчи ĕççыннисем пирĕн тăван çĕршыва, партипе тата правительствăна чĕререн парăнса тăнине уççăн кăтартса параççĕ.

Анчах фронта пулăшас ĕçе пирĕн кунран-кунах малалла вăйлатса пырас пулать. Халĕ пирĕн хамăрăн пĕтĕм ĕçе çак задачăна пăхăнтарас пулать. СССР гражданинĕн, вăл кирек ăçта пулсан та, хăйне пур çĕрте те отечественнăй вăрçă участникĕ тесе шутламалла. Хĕрлĕ Çар вăй-хăвачĕ тыл мĕнле пулнинчен, эпир ăна кирлĕ япаласене вĕçĕ-хĕррисĕр тата хăвăрт парса тăнинчен нумай килет.

Пирĕн ÿсĕмсем пысăк. Анчах çав ÿсĕмсемпе лăпланса ларни йăнăш пулнă пулĕччĕ. Тăшман вăйлă-ха, унăн вăйĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкман. Пулас вăхăтсенче нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç пирĕн вăйлăн та татăклăн çапăçмалла пулать. Çакă вара промышленность туса кăларакан продукци хисепне ÿстерме, ĕç тухăçлăхне хăпартма хушать. «Нормăна тултарман пĕр рабочи те пулмалла мар!» — çак лозунг кашни предприятири ĕçĕн законĕ пулса тăмалла. Пирĕн предприятисен ĕç планне тата пуриччен малтан васкавлă заказсене пурнăça кĕртес плана ытлашшипех тултарса пымалла. Партипе совет организацийĕсен çĕнĕ предприятисене пулăшса пырас ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартас пулать. Ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, плана тултарма вĕсене конкретнăй сĕнÿсем парса, кулленех пулăшса ертсе пырас пулать.

Пирĕн республикăри колхозсем, килес çураки вăхăтĕнче кăтартуллăн ĕçлесе, пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешме тивĕçлĕ. Вĕсен выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне пур майсемпе те ÿстерсе пырас пулать. Партипе советсен вырăнти органĕсен колхозниксен анлă массисене умра тăракан задачăсене пурнăçлама мобилизацилемелле. Çуракине лайăх хатĕрленсе çитсе, ялхуçалăхĕн пур культурисем тăрăх та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешмелле.

Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене кунран-кун вăйлăнрах та вăйлăнрах пырса çапать. Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн паттăр та хăюллă боецĕсене пирĕн тылра хамăрăн пурнăça шеллемесĕр ĕçлесе пулăшмалла, фронта пулăшассине кунран-кун вăйлатса пымалла. 1942 çул нимĕç захватчикĕсене тата вĕсен çарне пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкмалли тата пĕтерсе хумалли çул пулмалла. Çак çул совет халăхĕ тата тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсем Германи фашизмне çĕнтерсе тĕп тунин çулталăкĕ пулса тăрĕ.

1942 çула хамăрăн ĕç вырăнĕсенче пурнăçа шеллемесĕр татах та вăйлăнрах ĕçленипе, фронта пулăшассине татах та вăйлатнипе паллă тăвар!

Пăлтах фронт валли, йăлтах тăшмана çĕнтерес ĕç валли!

А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

Çĕнĕ специальноçсене вĕренсе алла илеççĕ

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корреспонденчĕ). Вагонсем юсакан заводри колеснăй цех васкавлă заказсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлет. Вăл заказсене пурнăçланă чух кĕске вăхăтрах çĕнĕ ĕçсене вĕренес ыйту çивĕччĕн тухса тăрать. Çавна шута илсе колеснăй цех руководителĕсем рабочисене çĕнĕ профессисене вĕрентесси çине тимлĕн çаврăнса пăхаççĕ. Цех начальникĕ коммунист Соколовский юлташ ертсе пынипе чылай рабочисем тепрер станокпа ĕçлеме вĕренеççĕ. Токарь Змеев юлташ ку таранччен пĕр йышши станокпа ĕçленĕ. Васкавлă заказсене туса кăларма пуçланăранпа тепĕр йышши станокпа ĕçлеме вĕренчĕ. Халĕ вăл çĕнĕ станокпа ĕçлесе, нормăна икĕ хут ирттерсе тултарать. Змеев юлташ çамрăксене те çĕнĕ ĕçе вĕрентет. Вăл хăй çумне Дудченко ученике вĕрентме илнĕ. Ăна хăйĕн ĕç опычĕпе паллаштарать, токарь ĕçне вĕрентет. Змеев юлташ вĕрентнипе Дудченко ĕçе хăвăрт хăнăхса пырать. Халĕ вăл хăй тĕллĕнех бандажсене якатма, çĕрĕсене касма тата ытти çавăн пек ĕçсене тума пултарать. Дудченко юлташ токарь ĕçне, тĕпрен илсен, вĕренсе çитнĕ, техэкзамен тытасси çеç юлнă.

Токарь Т. Кучеров тума пĕлмен ĕç çук темелле. Вăл халĕ 5 станокпа ĕçлеме пултарать. Кашнипех ĕçе пысăк тухăçлăхпа, лайăх пахалăхпа тăвать. Вăл пĕр браксăр ĕçлесе сменăри заданине яланах 200—300 процент тултарать. Чылай чух Кучеров юлташ кану вăхăтне пĕлмест, смена хыççăн та юлса ĕçлет. Декабрĕн 17—18-мĕшсенче унăн васкавлă заказ пурнăçламалла пулнă. Кирлĕ ĕçе вăхăтра тăвас тесе, вăл смена хыççăн татах 4—5-шер сехет юлса ĕçленĕ.

Вăрçă пуçланиччен Трубченко юлташ прессовщик пулнă. Вăрçă кунĕсенче вăл токарь тата сверловщик ĕçĕсене вĕренсе çитнĕ. Халĕ вăл токарь пулса та, сверловщик пулса та ĕçлет. Икĕ специальноçĕпе те сменăри нормăна 175—200 процент тултарса, лайăх пахалăхлă продукци парать.

Ку таранччен прессовщик пулнă Варламов та халĕ сверловщик ĕçĕсене лайăх тăвать. Токарь Прокопенко икĕ станокпа ĕçлет. Варламовпа Прокопенко юлташсем кирек хăçан та нормăна 200 процентран кая тултармаççĕ, ĕçре пĕр брак, пĕр простой тумаççĕ.

Юлашки вăхăтра цехра чылай çамрăксене çĕнĕ специальноçсене вĕрентнĕ. Декабрь уйăхĕнче кăна 7 çамрăк техэкзамен тытса токарь, сверловщик, слесарь ячĕсене илнĕ.

Пĕр-ик уйăх каялла Усовпа Владимирова юлташсен нимĕнле специальность та пулман. Вĕсем çак цехрах чернорабочи пулса ĕçленĕ. Романовпа Николаева мастерсем вĕсене токарь специальноçне вĕрентме килĕшнĕ. Пĕр уйăх ытларах тимлĕ вĕренсе, Владимирова юлташ токарь ĕçне хăнăхса çитнĕ. Декабрĕн 18-мĕшĕнче вăл техэкзамен пачĕ, «лайăх» паллă илчĕ. Халĕ вăл хăй тĕллĕнех токарь пулса ĕçлесе паха продукци парать.

Çӳлте асăннă юлташсем ĕç вырăнĕсемпе станоксене таса тата тирпейлĕ тытас тĕлĕшпе пример кăтартаççĕ. Вĕсен ĕç вырăнĕнче нихăçан та çӳп-çап, станоксем çинче тусан курас çук.

Станоксене тирпейлĕ пăхса усрас тĕлĕшпе цехри рабочисене инструкци параççĕ. Инструкцилес ĕçе главнăй механик заместителĕ Лотманизов юлташ ертсе пырать.

Çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри стахановла бригадăсем çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕç. Слесарь Паранин юлташ ертсе пыракан бригада юлашки вăхăтра кашни сменăрах 5—6 норма туса ĕçлет. Хăшпĕр кунсенче унтан та ытларах тултарать. Сăмахран, декабрĕн 23-мĕшĕнче нормăна 709 процент таран тултарчĕ.

— Ку пирĕн юратнă тăван çĕршыва çĕнĕ çул ячĕпе кӳнĕ парне пултăр,— тет, хăйĕн бригадин çитĕнĕвĕсем çинчен сăмах хушса, Паранин юлташ.

Вагонсем тăвакан цехри Рассказчиков юлташăн бригади васкавлă заданисене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлет. Çĕнĕ çул умĕнхи ăмăртура вăл малти рете тухрĕ. Фронта кирлĕ продукцисене васкавлăн туса кăларас тесе, сменăри нормăна 400—500 процент тултарса пычĕ. Материалсене пĕр чăрмавсăр тата çителĕклĕ парса тăнă кун — декабрĕн 23-мĕшĕнче — ĕç тухăçлăхне 5 хут та ытла ӳстерчĕ. Халь Рассказчиков юлташ ĕç тухăçлăхне çавăнтан пĕрре те чакармасăр ĕçлес тесе кĕрешет.

Базаров юлташ отечественнăй аслă вăрçă пуçланиччен сверловщик пулса ĕçленĕ. Вăрçă кунĕсенче вăл слесарь ĕçне вĕренсе çитрĕ. Халь Базаров юлташ слесарьсен бригадин бригадирĕ пулса ĕçлет. Унăн бригади пур ĕçе те вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек васкаса тата паха тăвать. Декабрĕн юлашки вунăкунлăхĕнче задание 300 процентран кая мар тултарчĕ.

Çĕнĕ çул умĕнхи ăмăртура кровельщиксен бригади те пысăк çитĕнӳсем турĕ. Нормăна кулленех 250 процент тултарса пычĕ. Фронта ытларах продукци парас тесе, бригадăри мастер Мрачковский хăй те алă ĕçĕпе ĕçлеме тытăнчĕ. Ăна кура ыттисем татах та тăрăшса, тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Богданов, Забанин, Кузнецов кровельщиксем кашни сменăра икшер норма тултараççĕ.

— Эпир декабрь уйăхĕнче иртнĕ уйăхринчен чылай лайăх ĕçлерĕмĕр,— тесе каласа кăтартать вагонсем тăвакан цехăн начальникĕ Коломеец юлташ.

Заводри стахановла бригадăсем пурте çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç.

Т. ИВАНОВ.

Учитель-агитаторсем

ÇĔРПӲ. Старакри вăтам шкулти учительсем колхозниксем хушшинче агитацилле-массăллă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. А. Фомина, А. Андреев, Е. Поликарпова тата Н. Сергеева учительсем хăйсене çирĕплетсе панă бригадăсемпе участоксенче тăрăшсах çĕнĕ хаçатсем вуласа параççĕ, Совет Информаци бюровĕн пĕлтерĕвĕсем тата партипе правительство йышăннă решенисем çинчен ăнлантарса параççĕ.

Старак учителĕсем колхозсенче Совет правительстви кăларнă укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене паянхи кун тĕлне 2.130 тенкĕлĕх сарнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Андреевпа Поликарпова юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Хальхи вăхăтра Старакри учительсем «Цивильстрой» колхозникĕсем Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе татах та вăйлатма тăрăшнине кашни бригадăрах вуласа парса, калаçусем ирттереççĕ.

М. СКВОРЦОВ.

Стахановла коллектив

Шупашкарти «Красный кустарь» артель коллективĕ 1942 çула чаплă çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илет. Скорняжнăй цехри работницăсем Мальчикова, Филатова, Гурьянова тата ыттисем те ноябрь уйăхĕнчи плана 287 процент тултарнă пулсан, декабрĕн малтанхи çуруйăх планне 325 процент пурнăçларĕç. Филатова, Мальчикова юлташсем уйăхри задание декабрĕн 26-мĕшĕнчех 300 процент пурнăçларĕç. Работницăсенчен нумайĕшĕ 2,5 норма тултарса ĕçлеççĕ.

Артельри работницăсенчен 82 проценчĕ стахановецсемпе ударниксем шутланаççĕ. Кашни работница тыла çирĕплетес шухăш-кăмăлпа 2—3 çыншăн ĕçлеме тăрăшать.

Декабрь уйăхĕнче артель коллективĕ виçĕ воскресникре ĕçлесе 1730 тенкĕ илнĕ. Çав укçана пĕтĕмпех танксен соединенине тума панă. Артель коллективĕ «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 215 тенкĕ укça, 2300 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пухса панă.

Çĕнĕ çул ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем патне пурĕ 375 тенкĕлĕх парне ярса панă.

М. СМЕТАНИН.

1942 ÇУЛТИ ÇУРАКИНЕ ВАЙЛАН ХАТЕРЛЕНЕР. Шупашкар районĕнчи «1-ое Мая» колхозра С. Г. Григорьев юлташ ертсе пыракан агрокружок лайăх ĕçлет.

Ӳкерчĕк çинче: агрокружок членĕсем вăрлăх тырра суйласа хума вĕренеççĕ.

ЯСТРЖЕМБСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ.

1942 ÇУЛ

Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул,
Шуса пырать. Пĕтет асап,
Хăрать хĕнхур. Кивви иртет.
Тусем çинче, çеçен хирте
Çĕнни çӳрет, тăван киле
Ача пек çамрăк çул килет.

* * *

Тавсъе, çĕршывăм! Тĕнчере
Хисеплĕ эсĕ ĕмĕрех.
Никам çĕнми хĕрӳ хăват
Хĕвел пекех çиçсе çунать
Сĕткенлĕ хирӳсем çинче.
Санра пурте — мĕнпурĕ пур,
Январĕн юрĕ пек шап-шур
Кулачă сĕтелсем çинче,
Тип-тикĕс аслă хирсенче
Ав, кĕçенеççĕ лашасем,
Улма чăпар кăкăрлисем,
Тивлетлĕ йĕкĕтсем валли,
Пăшаллă паттăрсем валли
Юртаççĕ Атăл хумĕ пек,
Хура чаканлă хăмăш пек
Аваççĕ тӳрĕ пилĕкне,
Силлеççĕ çăмăл йĕнерне.
Çĕршыв—çĕршывăмăр, сан ят
Вĕçĕ-хĕррисĕр янăрать,
Санра — чи тутлă виноград,
Чи тутлă пыл, чи тутлă чей,
Чи аслă, сарлака телей
Хăватлă пирĕн çĕр çинче,
Совет çĕршывĕн садĕнче,
Мухтавлă Сталин умĕнче.

* * *

Çĕршыв—çĕршывăмăр, сана,
Ытармалла мар мухтавна
Хĕвел патне, çӳлтен çӳле
Йăтатпăр; фашистла çĕлен
Сăхаймĕ санăн чĕрӳне,
Октябрь чапĕн ялавне
Эпир пĕрре те нихăçан
Яман, ярас çук алăран.
Фашист-калта юпа çине
Çакать-и пирĕн çынсене
Хĕрес касать-и, куççене
Чавать-и е краççын сапса
Ярать-и чĕррĕн сунтарса, —
Анчах юратнă юлташсем
Пуçне усмаççĕ хĕн килсен,
Хĕвел пек хĕрлĕ ялава,
Куçран та хаклă çĕршыва
Сыхлаççĕ, вилнĕ чух алла
Ялан тăсаççĕ малалла.

* * *

Ылханлă Гитлер тĕнчене
Чикесшĕн хăй атти айне,
Анчах та фюрер хӳрине
Таптатпăр. Çитĕ, çитĕ кун,
Шалçи тулса картланĕ ун!
Мухтавлă пирĕн Мускавра
Парад тăвасшăнччĕ, вара
Пуçне хупах пек касăртса,
Хĕрсе кайса, эрех ĕçсе
Пуплесшĕн пулнă нимĕçле.
Анчах хăватлă Хĕрлĕ Çар
Ун ĕмĕтне çапса чăлпар
Салатрĕ. Çитĕ, çитĕ кун,
Шăпи ӳпне йăванĕ ун!
Суеçĕ фюрер чĕлхине
Касса илсе, хăйĕн умне
Хурса ыйтăпăр: Вас ис дас?
Чĕнеймĕ фюрер, пулмĕ сас,
Тытаймĕ фюрер хăй хĕçне,
Ăнланĕ, йĕрĕ нимĕçле.

* * *

Çĕршыв—çĕршывăмăр çак çул,
Паян пуçланнă аслă çул
Пиншер çултан та тĕнчере
Янравлă хăй ятне чĕрĕ
Хăварĕ; çак кунсем çинчен
Сăвăçăсем сăввисенче
Ялан та юрлĕç; çак вăрçа
Тухса хастарлăн çапăçса
Чапланнă пирĕн тантăшсен
Манми хитре портречĕсем
Чи пысăк çӳлĕ суртсенче
Чи паллă пулĕç, сут тĕнче
Ялан пуç тайĕ вĕсене,
Пуç тайĕ ирĕклĕх чысне
Çăлса хăварнă çынсене.

УХСАЙ ЯККАВĔ.

ÇĔНĔ ÇУЛА

Килех, çĕнçул, кĕмĕл пекех
Чăлт шур юрпа йăл-йăл çиçсе.
Эпир сана хĕпĕртесех
Илетпĕр ыр хăна пек кĕтсе.

Килех, çĕнçул, шап-шур юрпа
Уйхирсене витсе тултар,
Сивĕпеле, çил-тăвăлпа
Фашистсене хирсе тустар!

Хĕл — пирĕн тус, çĕнĕ вăйпа
Тăшман çине хаяррăн пус!
Шăнтса хытар, шăл, вит юрпа
Бандитсене, хĕл, пирĕн тус!

Килех, çĕнçул, совет çĕрне
Çĕнтерӳпе мухтав илсе,
Мухтавлăн кĕр историе
Ĕмĕрсене тĕлĕнтерсе!

В. ТУРТУШ.

1942 ÇУЛТА КОК-САГЫЗ НУМАЙРАХ ТУСА ИЛЕР

Каучукпа усă курас енĕпе пирĕн çĕршыв тĕнчере иккĕмĕш вырăн йышăнса тăрать. Ку тĕлĕшпе пирĕнтен малта Америкăн Пĕрлешӳллĕ Штачĕсем кăна тăраççĕ. Хальхи самантра каучук халăх хуçалăхĕн пур пайĕсенче те питĕ кирлĕ, тата унпа анлăн усă кураççĕ. Халĕ, нимĕç фашисчĕсен вăрă-хуралла çарĕ пирĕн çĕршыва сĕмсĕрленсе кĕнипе вăрçă пынă вăхăтра, каучука нумайрах тăвасси, ăна паракан ӳсентăрансене лартса ӳстересси колхозсем умĕнче тăракан питĕ пысăк задача пулса тăрать, мĕншĕн тесен каучук вăл оборонăна çирĕплетме питĕ кирлĕ.

Каучука пирĕн çĕршывра искусственнăй майпа та тăваççĕ тата ӳсентăрансене çитĕнтерсе, вĕсенчен тупаççĕ. Искусственнăй майпа тупакан каучука — синтетический каучук теççĕ. Ăна пирĕн çĕршывра нумай тăваççĕ пулсан та, промышленноçа каучук питĕ нумай кирлĕ пирки, каучук тытакан ӳсентăрансене, вĕсенчен чи лайăххине—кок-сагыза лартса ĕрчетессине пирĕн анлăн тумалла. Çавăнпа СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1941 çулăн февралĕн 28-мĕшĕнче кок-сагыз культурине акассине ытларах сарас тата унăн тухăçлăхне ӳстерес пирки ятарласа постановлени йышăнчĕç. Çак постановлени вăл колхозсемпе совхозсене кок-сагыз акса пысăк тупăш туса илме çул уçса парать.

Иртнĕ çулсенче нумай колхозсем кок-сагыз лартса çитĕнтерсе пысăк тупăш илчĕç. 1932 çулта кок-сагыза 900 гектар çине çеç акнă пулсан, кăçал ăна вуншар пин гектар çине акса, нумай миллионшар тенкĕ тупăш илчĕç. Нумай колхозсем ытти тырăсене акса тунипе пĕрлех кок-сагыза та акса тăваççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх 1942 çулта пирĕн республикăра кок-сагыза чылаях нумай акса тумалла. Каучук тăвас енĕпе ĕçлекен научнăй работниксен, специалистсен, агрономсен, учительсен тата иртнĕ çулсенче кок-сагыза ăнăçлăн туса илнĕ колхозсенчи колхозниксен кок-сагыз лартса ӳстерме ытти колхозниксемпе колхозницăсене вĕрентес пулать, ĕç майĕсемпе паллаштарас пулать. Çитес çулта кок-сагыза нумай акса ăнăçлăн туса илессишĕн, ку тĕлĕшпе партипе правительство кăтартнисене лайăх пурнăçлассишĕн пурин те кĕрешмелле.

Чăваш республикинче кок-сагыза 1940 çулта массăллăн ĕрчетме пуçланă. 1939 çулта кок-сагыза 8 колхозра акнăччĕ. Вăл тикĕс шăтса лайăх çитĕнме тытăннăччĕ. Анчах ун чухнехи типĕ çанталăк кок-сагыз тымарĕсене çитĕнме чарса тăчĕ. Çапах та Чкаловски районра кок-сагызăн чĕрĕ тымарне гектартан 20-шер центнер ытла пухса илнĕ. Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз кок-сагыза нӳрлĕрех çĕр çине акса кашни гектартанах 10-шар тонна тымар туса илчĕ.

Çак колхоз туса илнĕ кок-сагызăн тымарне эпир тĕпчесе пăхрăмăр. Унăн тымарĕ 7 процент ытла каучук тытса тăни палăрчĕ. 1940—1941 çулсенче ӳстернĕ кок-сагыз тымарĕнче каучук тухăçлăхĕ тата нумайрах пулни палăрчĕ. Пĕрремĕш çул ӳснĕ чухне çак кок-сагызăн 16 процентран пуçласа 50 процента çити çеçкисем çурăлса вăрăллă пулчĕç. Иккĕмĕш çулта пур çеçкесем те вăрă ӳстерчĕç. Кок-сагыз лартса ӳстерни вара вăрлăх тунă енĕпе те колхозсене пысăк тупăш пачĕ.

Хăшпĕр тĕпчевçĕсене кок-сагыз çуллахи типĕ вăхăтра çулçисене типĕтни хумхантарать. Çакна кок-сагыза çӳллĕрех вырăнсенче акнă çĕрте ытларах курма пулать. Ăна кок-сагызăн çуллахи «канăвĕ» теççĕ. Вăл кок-сагыз тăтăшах ӳсме ăна валли нӳрĕлĕх çитменнинчен килет. Унăн çуллахи «канăвĕ» енче кок-сагыз çанталăк условийĕпе майлашать, пĕр вăхăтлăха шыва пăслантарса кăларакан çулçисене тăкса, вăл хăйĕн çеçкисенче нӳрĕлĕхе сыхласа хăварать. Çумăр вăхăчĕ çитсен вара кок-сагыз çĕнĕ çулçăсем кăларать те малалла ӳсет. Çапла ĕнтĕ çак ӳсентăран çулталăк хушшинче икĕ хутчен ӳсме чарăнса «канать»: пĕрре—хĕлле, тепре—çулла, типĕ вăхăтра. Çак «кану», паллах, кок-сагыза ăнăçлăн туса илме чăрмантарать, мĕншĕн тесен çуллахи «кану» вăхăтĕнче кок-сагызăн тымарĕ те ӳсме чарăнать, çавăнпа вăл вăхăтра каучук та пухăнмасть. Çакна шута илсе кок-сагыза нӳрĕрех вырăнсене акас пулать. Çу çумăрлă пулсан, кок-сагыз пур çĕрте те лайăх ӳсет.

Кок-сагыз çемçе, сĕтеклĕ çĕре юратать. Кĕркунне акас пулсан, кок-сагыза юшкăн çĕрлĕ лаптăксем çине акмалла мар. Юшкăнлă лаптăксемлĕ çĕр çине çуркунне акас пулсан, кок-сагыз вăррисем пĕр сантиметртан тарăн акăнмалла мар. Тăпра хулăм пулсан, кок-сагызăн çамрăк çулçисем шăтса тухаймаççĕ.

Чăваш республикинче кок-сагыз кăнтăр енчи районсен хура тăпраллă çĕрĕ çинче çеç мар, çурçĕртерех районсен кĕллĕрех тăпри çинче те чиперех ӳсме пултарать. Тунă опытсем Шупашкар районĕнчи çĕр çинче те кок-сагыз тымарĕ аванах çитĕннине тата вĕсенче каучук та çителĕклĕ пухăннине кăтартрĕç. Паллах, кунта çĕре ытларах çемçетмелле. Кок-сагыза çемçе, çум курăкĕсенчен тасатнă çĕре акас пулать. Торфлă вырăнсенче, кантăр акнă вырăнсенче кок-сагыз питĕ лайăх пулать. Кок-сагыз акас тенĕ вырăна, ăна малтанхи çулсенче çемçетмен пулсан, 10 кун маларах кашни гектар çине 30—40 тонна тислĕк, 2—4 центнер суперфосфат çăнăхĕ, 1—2 центнер сульфат аммонийĕ, 0,5—2 центнер калий тăварĕ е 6 центнер кĕл хумалла. Çĕрне 20—25 сантиметр тарăнĕш сухаласа çӳремелле. Çум курăкĕсене кок-сагыз акнă çĕртен тасатсах тăмалла.

Пирĕн условисенче кок-сагыза октябрь уйăхĕн вĕçнелле, типĕ çанталăкра акмалла. Акнă хыççăн ăшă 5 градусран мала пулмалла мар, мĕншĕн тесен ăшăра шăтнă кок-сагыз хĕлле шăнса пĕтме пултарать. Кок-сагыза шăннă çĕр çине, е çиллĕ кунсенче акма кирлĕ мар. Çиллĕ кунсенче унăн вĕтĕ тата çăмăл вăррисем вĕçсе сая кайма пултараççĕ. Кок-сагыз вăррине опилкăпа е вир хуппипе хутăштарса акма та юрать. Пĕр гектар çине 2 килограмм таран вăрлăх акмалла. 3—5 сантиметр сарлакĕш йĕрсемпе акас пулать. Вĕсене вара 1—2 сантиметр хулăмĕш хура тăпрапа, вак торфпа, е кантăр арпипе витмелле. Çапла туни кĕркунне акнă кок-сагыза çуркуннене çу хушшинче çĕрте нӳрлĕх тытма май парать. Халĕ асăннă витмелли япаласене суперфосфатпа хутăштарса витсен тата лайăхрах пулать, мĕншĕн тесен суперфосфат вăл кок-сагыз çеçкисене шăтса тухсанах çитĕнме лайăх пулăшать.

1942 çулта пирĕн республикăра кок-сагыза нумай акмалла пулать. Ăна акма колхозсен вырăнсем, тислĕк тата ыттисене те хатĕрлемелле. Кок-сагыз акмалли машинăсем çинчен халех шутлама тытăнмалла. Ăна акма 1941 çулта кăларнă «ОКТ» сеялка юрăхлă тата «ОКДС—12», «ОТ—7» сеялкăсемпе те усă курма пулать. Çак сеялкăсем çук пулсан, е çителĕксĕр пулсан, пур сеялкăсене кок-сагыз акма майлаштарма пулать. Ку тĕлĕшпе колхозсене МТС механикĕсем, агрономсем пулăшмалла.

Доцент З. МИЛОВИДОВ.

Ашшĕпе ывăлĕ

I

Степан Филиппович Кондратьев паян ыйхăран ирех вăранчĕ. Тул çутăлаччен вăл каçхине пăхса тухма ĕлкĕреймен хаçатсене вуласа тухрĕ те, ытти чухнехи пекех, ирхи апат çисе тухса кайрĕ.

Тулта халĕ те çутăлса çитмен-ха, тӳпере çăлтăрсем выляни лайăххах курăнать. Сас-чӳ илтĕнмест, сайра хутра автансем авăтни, паровоз хăшлатни илтĕнсе каять.

С. Кондратьев юлташ комбинат умне çитрĕ. Будка умĕнче никам та курăнмасть. Вăл çĕлĕкне тӳрлетрĕ те будкăна кĕчĕ.

— Степан Филиппович, эсир мар пулĕ-çке? Епле ирех килтĕр. Гудок пуласси тата тепĕр сехет,—терĕ будкăра ларакансенчен пĕри.

— Пулма пултарать, — ответлерĕ С. Кондратьев юлташ.—Килте ним тума та аптăрарăм, чунăм цехах туртăнать.

Будка алăкĕ каллех хăвăрттăн уçăлса кайрĕ, контрольнăйне çӳллĕ те патмар çын кĕрсе тăчĕ. Ăна охранниксем часах палларĕç.

— Çакă вара çывăрма та пĕлмест, миçе норма тăватăн?—ыйтрĕ пĕри.

С. Кондратьев юлташ анчах кĕнĕ çын çине тинкеререх пăхса илчĕ те ун патнелле утса пырса алă пачĕ.

— Манăн ывăл вĕт вăл. Эпĕ икшер норма ытла тăватăп та, вăл виççĕх тăвать пуль,—терĕ кулкаласа.

— Тĕрĕс! Анчах çапах çителĕксĕр-ха.

Урăх калаçу пулмарĕ. Вĕсем иккĕшĕ те васкасах будкăран тухса комбинат территорине кĕрсе кайрĕç.

II.

Цехăн пĕр отделенинче вĕçĕмсĕр сасă янраса тăрать. Кунта арçынсем те, хĕрарăмсем те пур. Кашниех хастарлă ĕçе кӳлĕннĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем паян икшер норма турĕç. Кондратьев юлташ кăнтăрлахи апата тухиччен хăйне панă заданине икĕ хут ирттерсе тултарчĕ.

— Смена пĕтиччен çакăн чухлĕ продукци туса кăларатăп,—терĕ вăл хăйĕн юлташĕсене.

Цехра пĕрремĕш смена ĕçрен тухмаллине пĕлтерекен звонок янтраса каять. Степан Филиппович станок витĕр юлашки детальсене кăларать. Часах ун патне çамрăк рабочисем пыраççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ производствăна халь анчах килсе кĕнĕ, технологи процесне те вĕренсе çитеймен-ха вĕсем.

— Степан Филиппович, эпир пысăк ĕçпе килтĕмĕр,—тесе пуçлаççĕ çамрăксем.—Сирĕн ĕç тĕслĕхĕсем пире тĕлĕнтереççĕ. Каласа памăр-ши эсир пире хăвăрăн ĕçри опытсем çинчен?

— Эпĕ паян икĕ норма тăвас тесе ĕçлерĕм, кăнтăрлахи апата тухсан та вăхăт çитмесĕрех ĕçлеме пуçларăм. Çук, темле ĕçлесен те, нормăран ытла тăваймарăм,—каласа парать тепĕр çамрăкĕ.

С. Кондратьев юлташ кăшт кулса илет те çамрăксене хăй çывăхнерех чĕнет.

— Ĕçлессе эпĕ, сирĕн пекех, инструментсемпе ĕçлетĕп, материалсем, детальсем те сирĕнни пекех. Манăн шутпа, тухăçлăн ĕçлесси пĕтĕмпех ĕçлекентен килет. Инструментсемпе, детальсемпе йĕркеллĕ усă курасси те, ĕç вырăнне организацилесси те пĕтĕмпех рабочиран килет. Эпĕ ирхине ĕçе яланах темиçе минута малтан çитетĕп. Инструментсем хатĕрлетĕп, мастертан паянхи ĕçсем тата мĕнле материалсем пурри çинчен ыйтса пĕлетĕп. Инструментсем манăн яланах çивĕч, вĕсене эпĕ тирпейлĕ тытатăп. Ĕç вăхăтĕнче тулли усă куратăп, пĕр минута та манăн ахаль сая каймасть...

Малалла С. Кондратьев юлташ ĕç вăхăтĕнче рабочин мĕнле пулмалли, пĕлĕвне ӳстерсе пымалли çинчен тата ĕç тухăçлăхне хăпартса пыма рационализациллĕ сĕнӳсем пысăк пулăшу пани çинчен тĕплĕн каласа парать.

Çамрăк рабочисене ватă рабочин сăмахĕсем хавхалантараççĕ.

III.

Иккĕмĕш смена пуçланас умĕн цехра рабочисен митингĕ пулчĕ. Унта цех начальникĕн заместителĕ инженер Евлампьев юлташ сăмах каларĕ. Вăл тăван Хĕрлĕ Çар юлашки вăхăтра туса пыракан пысăк çĕнтерӳсем çинчен тата умра тăракан задачăсем çинчен кĕскен те ăнланмалла каласа пачĕ.

— Пирĕн задача—хамăра панă задание пысăк пахалăхпа тата срокчен пурнăçласа пырасси, çавăншăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле,—терĕ вăл.

Инженер сĕнĕвне пурте пĕр çын пек пулса йышăнчĕç. Митинг пĕтрĕ. Çавăнтах звонок янтраса кайрĕ. Рабочисемпе работницăсем хăйсен вырăнĕсене ĕçлеме саланчĕç.

Яков Степанович хăйĕн бригадин членĕсемпе ĕнер тума пуçланă ĕçех тытăнчĕ. Ку таранччен пурте вĕсем урăх операцисенче ĕçленĕ. Бригадиршăн та ку ĕç çĕнĕ. Ик-виçĕ эрне каялла çех ăна çак вырăна куçарнă, çитменне тата бригадира лартнă.

Бригадăра 12 çын. Яков Степанович вĕсене кашнинех ĕç уйăрса пачĕ. «Астăвăр,—терĕ вăл,—пире питех те ответлă задани панă. Ман шутпа, эпир ĕнтĕ ку заказăн технологи процесне вĕренсе çитрĕмĕр, хăвăртлăхсене çеç ӳстермелле. Хальхи вăхăтра кая юлма юрамасть, уйрăмăнах пирĕн пуринчен малта пымалла».

Ĕç хăвăртланнăçемĕн хăвăртланса пычĕ. Анна Харитоновна Шереметьева юлташсем малтанхи сехетре, ĕнерхипе танлаштарсан, икĕ хут ытларах деталь турĕç. Производствăна халь анчах килсе кĕнĕ 17 çулхи Аверьянов та ăнăçлăн ĕçлеме пуçларĕ, пĕр брак та тумасть.

Пĕр вăхăт хушши ĕçленĕ хыççăн бригадир Кондратьев бригада членĕсен ĕç пахалăхне пăхса çаврăнать, ыйтса пĕлет.

— Пахалăх çине ытларах çаврăнса пăхăр, пĕтĕм продукци отлично пахалăхпа тухтăр,—асăрхаттарать бригадир.

IV.

Çулпуç чĕнсе каланине Çĕмĕрлери древкомбинатри рабочисем паха продукци туса кăларнипе тата ĕç тухăçлăхне ӳстернипе ответлеççĕ. Вĕсем хушшинче 2—3 норма туса ĕçлекенсем те сахал мар. Çав хисепе Степан Кондратьевпа унăн ывăлĕ Яков Степанович та кĕреççĕ. Вĕсем отечественнăй вăрçă кунĕсенче кашни кун виçшер норма туса ĕçлеççĕ. Кăтарту хăми çине пăхсан, вĕсен ячĕсем тĕлĕнче яланах 250, 300, 345 цифрăсем тăнине курма пулать.

Яков Степановича нумаях та пулмасть çĕнĕ ĕçе куçарчĕç. Паллă стахановец ку ĕçре те пример кăтартать, вăл ертсе пыракан бригада пуринчен малта пырать.

Эпир Яков Степанович Кондратьев юлташа юлашки вăхăтра цехра ĕç пуçланас умĕн куртăмăр. Эпир ăна кĕскен те пулсан хăйĕн ĕçĕсем çинчен каласа пама ыйтрăмăр.

— Мухтанма пултараймастăп, ĕçлетĕп ыттисем пекех. Аслă Сталин пирĕнтен фронта ытларах пулăшса пыма ыйтать. Эпир çавна пурнăçлассишĕн тăрăшатпăр та,—терĕ вăл.

Çакă вăл совет патриочĕн тĕрĕс сăмахĕ. Çакăн пек шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ пирĕн çĕршыври пĕтĕм ĕççыннисем.

Çĕмĕрле. **Х. ЛИСИН.**

Вĕренĕве вăрçă ĕçĕпе çыхăнтараççĕ

КАЛИНИНО. Калининăри педучилищĕре пĕтĕм ĕçе вăрçă ĕçĕпе çыхăнтарса туса пыраççĕ. Кăçал вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа темиçе хут воскресник туса ирттернĕ. Воскресникре ĕçлесе илнĕ тупăшсене оборонăна вăйлатма панă.

Вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕсенчех шкулта вăрçă ĕçне вĕрентме тытăнчĕç. Вĕренекенсем пурте ПВХО тата ГСО нормисене пачĕç. Ку ĕçе шкулти военрук С. М. Матвеев ертсе пычĕ. Нормăсене панă чух класпа класс ăмăртса вĕренчĕç. Ăмăртура II «А» класс мала тухрĕ.

Хĕл кунĕсем пуçлансанах вĕренекенсене пурне те йĕлтĕрсем валеçсе пачĕç. Ун хыççăн спорт ĕçĕ татах та вăйланчĕ. Халĕ йĕлтĕр спорчĕ училищĕре питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вĕренекенсем йĕлтĕрсемпе çӳресе тĕреклененеççĕ, инçене походсене кайма хăнăхаççĕ. Военрук çак кунсенче йĕлтĕр кросĕ умĕнхи ăмăртăва пуçарасси çинчен пĕлтерчĕ. Йĕлтĕр çаккисене çирĕпрех тума хушрĕ.

Кунсăр пуçне эрнере икĕ сехет вăрçă ĕçне вĕренмелли занятисем пулса иртеççĕ.

Н. ЗАХАРОВ.

Килес çулти пысăк çитĕнӳсемшĕн

1940 çулта пирĕн колхоз кашни гектар пуçне вăтам шутпа ыраш 12 центнер, çурхи тулă 14 центнер çеç пухса илчĕ. Ытти тырăсен тухăçлăхĕ те сахал пулчĕ. Уйхирсенче тырă начар çитĕнмĕ пирки, колхозниксем ĕçкунĕ çине 2 килограмм ытларах çеç тĕштырă илчĕç.

1941 çулта эпир тырă кăй тĕллĕн ӳсессе шанса лармарăмăр. Уйхирсенче вăйлăрах тырпул çитĕнтерес тĕллĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕмĕр. Хĕл каçиччен 110 гектар çинче юр тытса хăвартăмăр. Уйсене 1475 лав тислĕк, 7 тонна фосфорит сăнăхĕ, 29 центнер кĕл, 33 центнер чăх-чĕп каяшĕ кăлартăмăр. Вăрлăха лайăх тасатса, пур культурăсене те кондицине çитерсе акрăмăр. Агротехникăллă мероприятисене вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçласа пырса, колхоз 1941 çулта вăйлă тырпул туса илчĕ. Кашни гектар пуçне вăтам шутпа 14 центнер ытла ыраш, 15 центнер çурхи тулă тата ытти тырăсене те нумай пухса илчĕ. Тырпул тухăçĕ 1941 çулта 1940 çултинчен чылай ӳсни тĕрлĕрен фондсене нумайрах уйăрса хăварма, ĕçкунĕсем çине нумайрах валеçме май пачĕ. Кăçал пирĕн колхозниксем кашни ĕçкунĕ çине 3-шер килограмм ытла тĕштырă илеççĕ. 300—400-шер ĕçкунĕ тунă колхозниксем М. Федоров, А. Михайлов, А. Игнатьева, П. Гаврилов, Е. Прокопьева, А. Иванов, А. Осипов, А. Данилова тата ыттисем те 10—13-шер центнер таран тĕштырă илеççĕ.

1941 çулта, отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра, эпир уйхирсенчи вăйлă тырпула кĕске вăхăтра тата тăккаламасăр пухса кĕртрĕмĕр.

Октябрĕн 28-мĕшĕнче авăн çапса пĕтертĕмĕр. Уйхир ĕçĕсене пуçтарнă пекех, колхозниксем фронта пулăшас ĕçе те активлăн хутшăнчĕç. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 40 тир, 17 килограмм çăм тата ытти япаласем те нумай пачĕç. Оборона фондне колхоз 20 центнер тырă, пĕр ĕне пачĕ.

Çĕнĕ çула эпир ялхуçалăх ĕçне ăнăçлăн вĕçлесе, государство умĕнчи обязательствăсене пурне те пурнăçланипе, кирлĕ фондсене çителĕклĕх уйăрса хунипе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илтĕмĕр.

1942 çул пирĕн колхозшăн ăнăçлă çул пулчĕ. 1942 çулта çĕнĕлле ĕçлесе татах та пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешетпĕр. Тырпул тухăçне ӳстерме уйхирсене 1302 тонна тислĕк, 54 центнер кĕл, 37 центнер чăх-чĕп каяшĕ, 11 тонна фосфорит сăнăхĕ кăларатпăр, 140 гектар çинче юр тытса хăваратпăр. Паянхи куна щитсем тăратса тухнă, 15 центнер кĕл, 10 центнер ытла чăх-чĕп каяшĕ хатĕрленĕ. Çуртырри вăрлăхĕсене тасатса хунă. Çитес кунсенчех ялхуçалăх машинисене, урапа, хăмăт-пăяв тавраşсене юсама тытăнатпăр.

Çĕнĕ çулта çĕнĕлле ĕçлесе, нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме тăван çĕршыва пулăшса, Хĕрлĕ Çара ытларах тĕреклетессишĕн кĕрешетпĕр.

И. ДАВЫДОВ.
Лапрари «Совет» колхозăн председателĕ.
Çĕрпӳ районĕ (Телефонпа).

Çĕнĕ çула фронта пулăшас ĕçе вăйлатнипе кĕтсе илчĕç

1942-мĕш çула пирĕн ĕççыннисем отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра кĕтсе илчĕç. Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ чĕнĕвĕпе çĕкленнĕ совет халăхĕ нимĕç оккупанчĕсене совет çĕрĕ çинчен тĕппипех шăлса ывăтма мĕнпур вăя мобилизацилет. Хамăрăн геройла Хĕрлĕ Çара пулăшасси кулленех ӳссе пырать. Çĕршыв оборонин фондне тăвас движени пĕтĕм çĕршывĕпех анлăн саралчĕ.

Красноармейски районри ĕççыннисем çĕршыв оборонин фондне 78.842 тенкĕ укça, 144.615 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Кунсăр пуçне колхозсем тата колхозниксем тĕштырă, аш-какай, сĕт-çу, тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем нумай хывнă.

Комсомолецсемпе çамрăксем пуçарнипе «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезд тума укça пухас ĕçе пĕтĕм ĕççыннисем хутшăнчĕç. Районĕпе декабрĕн 27-мĕш тĕлне «Комсомол Чувашии» бронепоезд тума пурĕ 46 пин тенкĕ ытла укça пухнă.

СССР правительстви йышăннă тăрăх ССР Союзĕн Наркомфинĕ укçа-тенкĕпе япала лотерейине ирттермелле тунине пĕтĕм халăх пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕ. Ĕççыннисем вăл лотерейăн билечĕсене пысăк хаваслăхпа çыранса илчĕç. Красноармейски районри ĕççыннисем кăна лотерея билечĕсене 111.230 тенкĕлĕх илме çыранса, 39.259 тенкĕ укçине çийĕнчех хывнă. Нумай колхозсенче лотерея билечĕсемшĕн пама тивĕçлĕ укçасене пĕр кун хушшинчех тӳлесе татрĕç. Акă, Албахтино ялсоветĕнчи «Сила» колхоз членĕсем лотерея билетне 3010 тенкĕлĕх илме çыраннă та укçине пĕтĕмпех парса татнă. Çавăн пекех Упи ялсоветĕнче 2240 тенкĕлĕх сарнă та укçине 1906 тенкĕ хывнă, Тип-сырма ялсовечĕ тăрăх 2310 тенкĕлĕх сарнă, укçине пĕтĕмпех пухнă.

Ĕççыннисем çĕнĕ çула фронта пулăшас ĕçе вăйлатнипе кĕтсе илчĕç. Вĕсем çĕнĕ çул ячĕпе çĕнĕ çитĕнӳсем туса малашне те пĕтĕм вăйпа ĕçлесе Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшу парса тăма хатĕр.

ИВ. ХАТАЕВСКИЙ.

Çĕнĕ çул парнисем

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Фронтри боецсем патне районри ĕççыннисем çĕнĕ çул ячĕпе 1500 килограмм туртакан 102 посылка янă. «14 лет Октября» колхоз 90 килограмм, Ленин ячĕпе тăракан колхоз 6 килограмм салă, 20 килограмм сухари, çу, «Большевик» колхоз 16 килограмм çу, 30 çăмарта, 5 килограмм аш-какай, 16 килограмм сухари, 30 пачка табак янă.

Райпищекомбинатра ĕçлекенсем пĕтĕмпе 6 посылка, 94 килограма яхăн ăсатнă.

* * *

Оборона фондне районри ĕççыннисем пĕтĕмпе укçан 359 пин тенкĕ, заем облигацийĕсем 207 пин тенкĕлĕх хывнă. «Большевик» заводри рабочисем юлашки эрне хушшинче кăна 20 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Кунсăр пуçне районри ĕççыннисем оборона фондне вуншар центнер аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, тырă панă.

* * *

Çĕмĕрле древкомбинатĕнче çĕнĕ çула производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕç. 1-мĕш номерлĕ цехри Ширяев юлташ бригади нормăна икĕ хут тултарнипе кĕтсе илнĕ. Декабрĕн 27-мĕшĕнче бригада плана 230 процент, 28-мĕшĕнче 241 процент тултарчĕ. Данилов юлташ бригади декабрĕн 28-мĕшĕнче 200 процент, Петрова бригади 217 процент тултарнă. 7-мĕш номерлĕ цехри Утехина, Парамонов, Вашеркина юлташсен бригадисем кулленхи нормăна икшер хут тултарнă.

* * *

СĔНТĔР. НКВД райотделенинчи работниксем боецсем патне çĕнĕ çул ячĕпе 7 килограмм печени, 18 пачка табак, 25 катăк супăнь, 12 комплект шăл тасатмалли хатĕрсем, 2 килограмм типĕтнĕ улма ячĕç.

В. ИСАЕВ.

РЕЙТЕР АГЕНТСТВИ ИДЕН МУСКАВРА ПУЛНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Мускавран пĕлтернĕ тăрăх, Иден Сталинпа пилĕк хутчен тĕл пулса калаçнă. Çак калаçусенчен хăшпĕрисем, сентябрь уйăхĕнчи конференци вăхăтĕнче Сталин Бивербрукпа тата Гарриманпа калаçнă пекех, питĕ вăрăма пынă. Халĕ паллă ĕнтĕ, калаçусен результачĕсем икĕ еншĕн те килĕшӳллĕ пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен тĕллевне пурнăçа кĕртнĕ. Çав калаçусенче союзниксем хушшинчи питĕ паха ыйтусене уççăн сӳтсе-явса, пĕр-пĕрне пулăшма хатĕррине практикăра кăтартса панă. «Официальнăй коммюнике çумне нимĕнех те хушаймăн, — тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, — мĕншĕн тесен çав коммюнике ĕçĕн чăн-чăн обстоятельствине туллин те уççăн кăтартса парать; çав официальнăй формулировкăсенче пĕрпĕрне шанса, хăйсен шухăшĕсене уççăн каласа пани курăнать. Çак калаçусем ĕнтĕ уйрăмах çакăнпа паллă пулса тăраççĕ».

«Иден Мускавра пуринчен малтан ĕç тума тăрăшнă пулин те, ĕç ыйтăвĕсене сӳтсе-явассинче вăл икĕ перерыв турă: пĕрремĕшĕнче вăл Ней генералпа пĕрле Мускавран çурçĕр-хĕвеланăç еннерехри фронта кайса курнă. Вĕсем илемлĕ Клин хулинчен нимĕçсем чакнă хыççăн мĕн юлнине курнă, çавăн пекех тата вĕсем тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсемпе курнăçса калаçнă, нимĕçсем вырăссен шартлама сивĕ хĕл условийĕсенче мĕн тери начар тумланса çӳренине курнă. Çавăн пекех вĕсем вырăссен çамрăк генералĕсем çĕнтерĕве мĕн тери шаннине курса ĕненнĕ.

Иккĕмĕш перерыв тепĕр каçхине, Сталин Англи делегацийĕпе посольство членĕсене кăнтăрлахи апата Кремле чĕннĕ пирки пулнă. Пысăк ĕç тунă пирки тата фронтран лайăх хыпарсем килнĕ пирки кăнтăрлахи апат вăхăчĕ питĕ кăмăллă иртнĕ».

Англипе Америка хушшинчи калаçусем çинчен

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 29-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Рузвельтпа Черчилль Шурă çуртра нумай çĕршывсен представителĕсене йышăнса, вĕсене Англипе Америка хушшинчи калаçусем мĕнле пыни çинчен каласа панă. Представительсем хушшинче Совет Союзĕн, Китайăн, Голландин, Англи доминионĕсен, çавнашкалах тата Германи оккупациленĕ нумай çĕршывсен, Латинла Америкăри çĕршывсен представителĕсем пулнă. Шурă çуртра туса ирттернĕ ирхи апатра Литвинов Рузвельтпа, Черчилльпе тата Гопкинспа калаçнă.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ çапла каланă: Рузвельтпа Черчилль иккĕшĕ пĕрле йышăннă решенисене каласа памаççĕ пулин те, анчах çапах та союзниксем хăйсен тĕп вăйĕсене, ĕлĕкхи пекех, Германие хирĕç кĕрешес ĕçе пама шутлани курăнса тăрать. Правительствăна çывăх çынсем хушшинче Филиппин утравĕсемпе Сингапур оборони çинчен нумай калаçаççĕ. Анчах çакăнпа пĕрлех Германие май килнĕ таран ытларах та ытларах хĕссе пыма кирлине йышăнаççĕ.

«ПМ» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ çапла каланă: Лăпкă океанра вăрçă ĕçĕсем пулса пыраççĕ пулин те, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Российăна ытларах та ытларах пулăшу парас политикăна тытса пыраççĕ.

Черчилль Канадăна çитнĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕш. (ТАСС). Паян Черчилльпе Макензи Кинг Оттавăна çитнĕ. Ыран Черчилль Канада парламенчĕн икĕ палатин пĕрлехи заседанийĕнче сăмах тухса калать.

Англие Америкăран продовольстви грузĕсем пынă

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Англин продовольствисем илес тĕлĕшпе ĕçлекен миссийĕ Çĕрĕç министрне пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен Англи валли илнĕ 1 миллион тонна продовольстви Англие чиперех çитнĕ. Ку продовольстви Америка хĕçпăшала кивçен е арендăна парас закон тăрăх панă.

Германипе Виши правительстви хушшинчи калаçусем

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатăн Парижри корреспонденчĕ пулнăскер Францире вăрттăн тухса тăракан «Верите» ятлă хаçатра октябрь вĕçĕнче Германипе Виши правительстви хушшинче Çурçĕр Африка пирки пынă калаçусем çинчен çырса пĕлтернĕ.

«Верите» çапла çырать: Дарлан тата шалти ĕçсен министрĕ Пюше, икĕ уйăх каялла татăлнă калаçăва çĕнĕрен пуçлас тесе, нимĕçсемпе Парижра октябрĕн 11-мĕшпе 16-мĕш числисем хушшинче курнăçнă. Вейган çакна пĕлсенех Алжиртан Вишине васкаса çитнĕ, вăл унта Петэна хăй нимĕçсем Çурçĕр Африкăна пырса кĕрессине хирĕç тăни çинчен пĕлтерме тата, Виши правительстви нимĕçсене Çурçĕр Африкăна кĕртме килĕшсен, хăй вырăнтан тухасси çинчен калама пынă. Дарланпа Пюше Вишине таврăнсан, хăйсем Германие Çурçĕр Африкăна кĕртме килĕшни çинчен тата Çурçĕр Африка çыранĕсенчи тинĕс базисемпе аэродромсене Германие пама килĕшни çинчен каласа панă. Тинĕс хĕрринчи пур портсенче те нимĕçсен контрольнăй комиссисем тата пысăк хуласенче уйрăм консульствăсем пулмалла, тенĕ вĕсем.

Петэн çак килĕшĕве йышăнман, çавăнпа та октябрĕн 17-мĕшĕнче Дарлан отставкăна тухнă, анчах та ун çинчен французсен хаçачĕсенче нимĕн те пĕлтермерĕç, тесе çырать «Верите» хаçат. Октябрĕн 25-мĕшĕнче Петэн уйрăм статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра вăл французсене—Çурçĕр Африкăна Германие памалла мар, çакăн пирки мăн пата — маршал Петэн патне тата Америка посолĕ адмирал Неви патне ыйтусем ярăр, тесе сĕннĕ.

«Верите» хаçат çакăн пек пĕлтернине кăтартса парса, корреспондент çапла çырать: çак ĕç çинчен лайăх пĕлсе тăракансем хушшинче каланă тăрăх, пĕтĕм Франци халăхĕ çак килĕшӳ пирки хытă тарăхса кайнă, çакна пула Дарланăн ĕçĕсем çавтери йывăрланса çитнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Декабрĕн 30-мĕшĕнчи телеграммăсене пăхса тухни)

ФИЛИППИНРИ Лусон утравĕ çинчи вăрçă операцийĕсем американецсемшĕн çаплах йывăр пулса тăраççĕ. Япони войскисем Лингайен заливĕнче тата Антимонана çывăхĕнче тăракан транспортсенчен пĕрмаях пулăшу илеççĕ. Ламортис участокĕсене японецсен çĕнĕрен пысăк чаçсем пырса çитнĕ. Ламон районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Лингайен заливĕн районĕнчи Япони войскисем, Агно юханшывĕн тепĕр енне каçса, хăйсен чаçĕсене урăхлатса йĕркелеççĕ. Кăнтăр фронтĕнче Япони войскисем хĕсе пырасси вăйланать. Юлашки талăксем хушшинче Японин Лусон утравĕ çинчи войскисен малалла куçса пырас хăвăртлăхĕ чылаях чакни палăрать, анчах, апла пулин те, кунти ĕçсем Америка çарĕсемшĕн начарлансах пыраççĕ.

Япони самолечĕсем Филиппинри промышленноçлă пунктсем çине, уйрăмăнах Манила çине çаплах пыра-пыра тапăнса бомбăсем пăрахаççĕ.

Америка бомбардировщикĕсем Минданао утравĕн кăнтăр çыранĕнче Японин войскăсем турттарса пыракан транспортне путарнă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕвеланăç çыранĕнче çаплах тăшманăн подводнăй лодкисем çӳреççĕ, вĕсем тинĕсре çӳрекен пароходсене тапăнаççĕ.

МИНДАНАО утравĕ çинчи ĕçсем уçăмлах мар. Юлашки хыпарсем тăрăх, Америка бомбардировщикĕсем, Японин Давао районĕнчи транспорчĕсем çине хаяррăн пыра-пыра тапăнса, вĕсем çинчен десант антарассине чăрмантараççĕ.

МАЛАЙĂРА Япони войскисем çĕнĕрен пысăк çар чаçĕсем пырса çитнĕ хыççăн каллех кăнтăр еннелле наступлени тума тытăннă. Вĕсем кунта тăхлан кăларакан промышленность центрĕн тĕп хулине тытса илме тăрăшаççĕ. Теракра та Ипо хули районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Япони войскисем Терак юханшывĕ урлă каçма хăтланнă, анчах та вĕсене Англи çарĕсем каçма паман. Англи çарĕсем кунта юханшыв хĕрринчи çӳлĕ тăвайкки çинче майлă вырăн йышăнса тăраççĕ. Англичансен позицийĕ японецсене малалла кайма кансĕрлет.

Токиоран официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Япони войскисем Ипо хулине йышăнса илнĕ, ку вăхăтра вĕсем Ипоран кăнтăр еннелле пыраççĕ. Çурçĕр çыранри Контан районĕнче Японин темиçе бомбардировщикĕ Англи войскисен позицийĕсене пулеметран персе тухнă. Теракра пуçланнă хаяр çапăçусем камшăн мĕнпе вĕçленесси паллă мар-ха, анчах та кунти çапăçусем Малайăра пыракан вăрçă ĕçĕсене чылай пысăк улшăну кӳмелле.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔНЧЕ, малтан пĕлтернĕ пекех, Япони войскисем Саравак провинцин (Борнео утравĕ çинче) тĕп хулине йышăнса илни çинчен калаççĕ. Декабрĕн 28-мĕшĕнче Японин 17 самолечĕ Меданри аэропорт çине пырса тапăннă. (Ку хула Суматра утравĕн хĕвелтухăç çыранĕнче ларать). Меданран 10 миляри вырăнта парашютистсен десантне антарнă. Халĕ çак вырăнта çапăçусем пыраççĕ.

Декабрĕн 28-мĕшĕнче Япони самолечĕсем Минахасад çурутравĕнчи темиçе пункт çине тапăнса бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнинчен пысăк сиенсемех пулман. Çав кунах Япони самолечĕсем Серонс çине (Çĕнĕ Гвиан çурçĕр енчи çыранĕнче) пырса тапăннă. Бомбăсем лекнипе пурăнмалли темиçе çурт тата правительство çурчĕсем ишĕлсе аннă. Юлашки кунсенче Япони авиацийĕ Голланди Индийĕн çыран хĕррисенчи районĕсене тапăнасси вăйланни палăрать. (ТАСС).

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: декабрĕн 28-мĕшĕнче Аджедаби районĕнче противникăн тĕп вăйĕсем пирĕн чаçсен наступленине чарма хăтланчĕç. Çапăçусенчен пĕринче противникăн танксем пулăшса пыракан колоннине каялла чактарнă, колоннăн 6 танкĕ пĕтнĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă коммюникере çапла пĕлтернĕ: декабрĕн 28-мĕшĕнче тăшманăн Аджедаби районĕнчи тĕп войскисем пирĕн наступлени туса пыракан чаçсене сирсе яма пăхнă. Çапăçусенчен пĕринче тăшман пехотин колонни, танксем пулăшнипе, малалла тапăнса тухнă. Анчах та унăн часах каялла чакма тивнĕ. Тăшманăн Барди районĕнчи пĕр-пĕринчен татăлса тăракан позицийĕсем çине Англи авиацийĕ вăйлăн пыра-пыра тапăнса нумай бомбăсем пăрахнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Англи самолечĕсем, тăшманăн Аджедабирен хĕвеланăçнелле каякан çул çинчи автотранспортне те атакăласа, нумай грузовикĕсене çĕмĕрсе тăкнă.

Рейтер агентстви Британи войскисем декабрĕн 28-мĕшĕнче ирхине Бенгазие пырса кĕни çинчен пĕлтерет. Бенгазире вĕсем ишĕлсе пĕтнĕ çуртсене çеç курнă.

Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, англичансем Ливире наступлени тума пуçланăранпа нимĕçсемпе итальянецсем унта 500 самолета яхăн çухатнă. Ноябрĕн 18-мĕшпе декабрĕн 23-мĕш хушшинче кăна, сывлăшран персе ӳкернисене, çĕр çинче пĕтернисене тата аэродромсем çинче тытса илнисене пĕрле шутласан, вĕсем пурĕ 476 самолет çухатнă. Англи войскисен çак вăхăтрах 195 самолет пĕтнĕ.

Декабрĕн 27-мĕшĕнче çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Триполитани çыранĕнче, Зуара çывăхĕнче, тăшманăн икĕ суту-илӳ парохочĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Ливире 38 кун хушши наступлени туса, Англи войскисем тăшманăнне 39 аэродром тытса илнĕ.

Бенгази хулинчен ишĕлĕк кăна тăрса юлнă

ЛОНДОН, декабрĕн 29-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Бенгазирен çапла пĕлтерет: Англин бронетанковăй çарĕсем Бенгазие декабрĕн 25-мĕшĕнче ирхине кĕнĕ, анчах унта хула тĕсĕ те юлман, хула ишĕлчĕкĕ кăна пулнă.

Германи халăхне вăрçă вăраха кайни хурлантарать

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 30-мĕш (ТАСС). «Нью дагенс алехандe» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: пĕр çулталăк каялла Германире халăха 1941 çул пĕтĕм ĕçсене татса паракан çул пулса тăрать тесе ĕнентерчĕç. Халĕ ку ун пек мар пулса тăчĕ. Çавăнпа та Берлин халăхĕ тата ытларах салхуланчĕ. Раштав кунĕсенче Геббельс сăмах тухса каланă. Унăн сăмахĕсенче шиклĕхпе пăшăрхану палăрать. «Иртнĕ çулти раштавра эпир вăрçă часах пĕтерессе шаннăччĕ, анчах та ĕç ун пек килсе тухмарĕ» тенĕ вăл.

Çав хаçатăннах Берлинри корреспонденчĕ: кăçалхи раштав праздникĕ Германире савăнăçлă мар. Халĕ ĕнтĕ никам та çитес çул вăрçăн юлашки çулĕ пулать тесе малтанах каласа пама хăяймасть, ĕçсем çакăн пек пулса тăни пурне те салхулантарать, тесе çырать.

Фашистсем килти мĕнпур ăшă япаласене пама хушаççĕ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 29-мĕш. (ТАСС). Нацистсен хаçачĕсем Гитлерăн çĕнĕ приказне хăвăртрах пурнăçа кĕртме чĕнсе, килти мĕнпур ăшă япаласене фашистсен сборщикĕсене пама хушаççĕ. Ăшă япаласене пама васканшăн «айăплама та пултараççĕ», темелле хăратаççĕ хаçатсем. «Фелькишер беобахтер» хаçат çапла çырать: «Эпир хамăра кирлех марри кăна пани сахал-ха. Пирĕн хамăра мĕн кирлине те памалла».

«Дейче альгемейне цейтунг» хаçат мăнкăмăллăн çапла çырать: «Эпир хамăр паракан ăшă япаласене алăрах ярас килменни çак паракан япаласен хакне татах та хăпартать». Çав хаçат çапла çырать: «Вăрçă ытла анлăн саралса кайни ĕнтĕ Германи халăхĕнчен темĕн те пĕр ыйтнин сăлтавĕ пулса тăрать». Германире кĕпе-тумтир тавраш ахаль те çителĕклĕ мар пулин те,—тесе çырать хаçат, — салтаксене Германи халăхĕн мĕн пуррине пĕтĕмпех памалла.

Финлянди хулисенче выçăпа аптраççĕ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Финсен «Амалекок» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Таммерфорс хули çăкăр çитменнипе хытă аптраса çитнĕ. Хулари çăкăр пĕçерекен икĕ пысăк заводран пĕри çăнăх çуккипе пачах ĕçлеме чарăннă ĕнтĕ. Иккĕмĕш завочĕ те кĕçех чарăнас пек тăрать. Булочнăйсенчен нумайĕшĕнче темиçе кун ĕнтĕ çăкăр илме çук. Хулари влаçсем темиçе хутчен те государствăн тыр склачĕсене пăхса тăракан администрацийĕнчен Таммерфорса васкасах çăнăх яма ыйтнă. «Ĕçме-çиме тĕлĕшпе питĕ хĕсĕк пулсан та,—тесе çырать хаçат, — хулана çăнăх памаççĕ».

Йĕлтĕрçĕсен кросĕ умĕн

Белофинсене хирĕç çапăçнă чухне автоматсемпе хĕçпăшалланнă йĕлтĕрçĕсем тăшмана çĕмĕрес тĕлĕшпе питех те пысăк çĕнтерӳсем тунă. 1939—1940 çулсенчи шартлама сивĕсенче вĕсем тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешрĕç.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем тăшмана пĕрре кăна мар çĕмĕрсе тăкнă. Хĕллехи сивĕ пире нихăçан та шиклентермест. Урса кайнă фашистсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăра совет йĕлтĕрçисен ролĕ пысăк.

Совет Союзĕн Геройĕ маршал Тимошенко юлташ сăмахĕсене кашни ĕççыннин асра тытса тăмалла. Вăл: «хĕллехи вăхăтра йĕлтĕрпе утма пĕлмесен, вăрçăра çĕнтерӳсем тума та май çук», тенĕ. Фашизма çĕнтерес ĕçре хĕллехи вăхăт паллă вырăн йышăнса тăмалла. Уйрăмăнах çак ĕçре йĕлтĕрçĕсен пысăк çитĕнӳсем тумалла.

Пирĕн çамрăксем спорт ĕçне питех те юратаççĕ. Çакна комсомолецсен Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа ирттернĕ кросĕ лайăх кăтартса пачĕ. Вăл кроса пирĕн республикăри комсомолецсем активлăн хутшăнчĕç, вĕсем пĕтĕм Союзĕпе тăваттăмĕш вырăн йышăнчĕç. Анчах пирĕн çак çитĕнӳ çинче чарăнса тăмалла мар, физкультура ĕçне çамрăксене тата ытларах явăçтарма тăрăшмалла.

ВЦСПС тата ЦК ВЛКСМ йышăннă тăрăх, кăçал февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 23-мĕшчен Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнă ятпа профсоюз членĕсемпе комсомолецсем йĕлтĕрпе çӳрес тĕлĕшпе кросс туса ирттереççĕ. Кросс вăхăтĕнче çамрăксем ГТО пĕрремĕшпе иккĕмĕш ступенĕн нормисене параççĕ.

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен кросĕ—питех те пысăк ĕç. Кроса çамрăксене ытларах хутшăнтарма тăрăшмалла. Ăна лайăх ирттерсен, пирĕн комсомолецсем йĕлтĕрпе тата авантарах çӳреме вĕренĕç, ГТО нормисене парĕç. Профсоюзсемпе комсомол организацийĕсен районсемпе хуласенче йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене туса ирттермелле. Çак кроса хутшăнакан çынсене малтан медицина тĕлĕшпе пăхса тухмалла.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ комсомолăн Шупашкар хулинчи комитечĕпе районри комитечĕсене, колхозсемпе МТС-чи, предприятисемпе учреждениесенчи пуçламĕш организацисене çак ĕçе халех хатĕрленме, кроса пур çамрăксене те хутшăнтарма, йĕлтĕрсене вырăнтах туса хатĕрлеме хушрĕ.

Вырăнсенче йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене туса ирттермелле. Çак тĕлĕшпе кашни комсомолецăн, кашни çамрăкăн йĕлтĕрпе спорт хатĕрĕсене илме тăрăшмалла. Кирлĕ йĕлтĕрсене вырăнти промышленность предприятийĕсенчех тумалла. Кашни комсомолецăн тата çамрăкăн кулленех йĕлтĕрпе çӳреме хăнăхса çитмелле.

Шупашкар хулипе Елчĕк районĕнчи комсомолецсемпе физкультурниксен хăшпĕр организацийĕсем кроса хатĕрленме тытăнчĕç. Шупашкар хулинчи комсомолецсем йĕлтĕрçĕсен пĕрремĕш ăмăртуне туса ирттерчĕç. Çак ăмăртăва пурĕ тăватă çĕр комсомолец хутшăнчĕ.

Хатĕрленӳ ĕçĕ ытти районсенче те пырать. Калинино районĕнчи шкулсем йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене туса ирттереççĕ. Ассакассинчи туллимар вăтам шкул туса ирттернĕ ăмăртăва пурĕ 35 çын хутшăннă. Калининăри вăтам шкулта вĕренекен 85 комсомолец, ăмăртăва хутшăнса, вунă километр йĕлтĕрпе кайнă.

Çакнашкал ăмăртусене Вăрнар районĕнче те туса ирттернĕ. Кунта 40 комсомолец çирĕм километр таран йĕлтĕрпе тухнă. Елчĕк районĕнчи комсомолецсем çак тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Шупашкар районĕнчи чылай вăтам шкулсемпе туллимар вăтам шкулсенче вĕренекен комсомолецсем хăйсемех йĕлтĕрсем тăваççĕ. Апашпа Шемшерти шкулсенче вĕренекен комсомолецсем 13-шер мăшăр йĕлтĕр туса хатĕрленĕ. Вĕсен пуçарăвне ытти шкулсене те куçармалла.

Паян шкулсенче вĕренекен ачасем каникула каяççĕ. Комсомол организацийĕсен каникул вăхăтĕнче йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене туса ирттермелле, ГТО тата БГТО нормисене илес ĕçе организацилемелле. Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене ирттернипе пĕрлех çамрăксене çар ĕçне те вĕрентмелле.

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен кросне хатĕрленес ĕçре комсомолецсен пур çамрăксене те пример кăтартса пымалла. Кроса лайăх ирттересси пуринчен ытларах комсомол организацийĕсем тăрăшса ĕçленинчен килет. Çакна кашни комсомол организацин асра тытса тăмалла. Уйрăмăнах ВЛКСМ райкомĕсен çар ĕçĕ енĕпе ĕçлекен секретарĕсен тăрăшмалла. Кроса ăнăçлăн ирттерессипĕтĕмĕшпех вĕсем çак ĕçе лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнинчен килет.

Р. ХАСЬЯНОВ.
ВЛКСМ Обкомĕн физкультурăпа çар ĕçĕ енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 6—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7459 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651. Ф 6. 58 84 п. л.